Российская библиотека им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНАЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Январь 8 ытларикун № 6 (8658)

Хакĕ 20 пус. 34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ (1 стр.).

ПАРТИ ПУРНАÇĔ: **Ф Малышкин.**—Активпа тачă çыхăнса ĕçлет; **Н. Андреев.**—Парторганизаци рольне ÿстерессишĕн (2 стр.).

Ĕçе тĕрĕс йĕркеленипе. Шупашкар районĕнчи «Красный флот» колхоз председателĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ П. Григорьев юлташ калаçа пани (2 стр.).

СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ. **А. Тукмаков.** — Суйлавçăсен наказĕсене куллен пурнăçламалла (2 стр.).

Валентин Урдаш.—Вăрман паттăрĕсем (2 стр.).

«Чăваш Коммуни» хаçатра çырнă хыççăн (2 стр.).

Д. Бочаров.—Тĕнчери лару-тăру (3 стр.).

И. Волков.—Учительсен канашлăвĕнчен (3 стр.).

Хамăр республика тăрăх (3 стр.).

Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Великобританири коммунистсен партийĕн съезчĕ пулать (4 стр.).

Смитăн фашистла законне хирĕç протестленĕ ятпа Нью-Йоркра пысăк митинг пулнă (4 стр.).

Сталин юлташ умĕнче йышăннă обязательствăсене чыслă пурнăçлар!

«Чăвашвăрман» трест предприятийĕсенче ĕçлекен рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем, колхозниксемпе колхозницăсем вăрман хатĕрлев планне срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнса пысăк обязательствăсем йышăнчĕç.

— Вăрман хатĕрлемелли сезон планне срокчен—мартăн 15-мĕшĕ тĕлне тултармалла, планран иртерсе çĕршыва 100 пин кубометр йывăç хатĕрлесе памалла;

— Касса хатĕрлекен йывăçран ĕçе юрăхлă йывăç планпа пăхниччен 10 процент ытларах кăлармалла;

— Ĕç тухăçлăхне ÿстермелли плана 102 процент тултармалла;

— Механизмсемпе ĕçлемелли плана пур енĕпе те иртерсе тултармалла;

— Вăрман ĕçлекен рабочисемпе колхозниксен культурăпа йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерессине лайăхлатмалла.

Çакăн пек ĕнтĕ вăрман предприятийĕсен руководителĕсем. вăрман ĕçлекенсем аслă Сталин умĕнче йышăннă обязательствăсем.

Совет халăхĕ Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе коммунизм тăвать. Атăлпа Днепр, Донпа Аму-Дарья шывĕсем çинче тĕнче историйĕнче пулман пысăк стройкăсем пуçланчĕç. Аслă çĕршывăн пур кĕтесĕсенче те строительство ĕçĕсем вăйлăн сарăлса пыраççĕ. Иртнĕ çул коммунизм строительствинче пысăк çĕнтерÿсем тунă çул пулчĕ. Промышленноçăн ертсе пыракан отраслисем государство планĕсене иртерсе тултарчĕç. Кăçал татах пысăкрах ĕçсем тумалла. Çĕршыв умĕнче тăракан историллĕ задачăсене ăнăçлă пурнăçлас тесен, халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслисем хăйсен ĕçĕсен хăвăртлăхĕсене куллен-кун ÿстерсе пыни кирлĕ. Аслă строительство ĕçĕсен планне тултарас ĕçре вăрман промышленноçĕ пысăк вырăн йышăнать. Вăл халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене паха материал—йывăç парса тăрать.

Пирĕн вăрман промышленноçĕ юлашки çулсенче тĕпрен улшăнчĕ. Вăрман хатĕрлекен предприятисем çултан-çул вăйлă техникăпа пуянланса пыраççĕ Электрех вăрман промышленноçĕнче мĕнпур ĕçсене алă вĕççĕн туса пынă пулсан, сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче çын ĕçне çăмăллатма вăрмана хаватлă техника пычĕ. Пирĕн вăрман хатĕрлекен предприятисенче автомобильсемпе пăравуссем. трелевочнăй тракторсемпе лебедкăсем, электростанцисемпе ытти механизмсем нумай ĕçлеççĕ. Республика вăрман промышленноçне Тăван çĕршыв çĕнĕ техника ытлăн-ситлĕн парса тăрать. «Чăвашвăрман» трест предприятийĕсем кăçал та çĕнĕ механизмсем нумай илеççĕ.

Вăрман хатĕрлевĕнче колхозсенчен пыракан туртăм вăйĕпе ĕç вăйĕ те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çаксем пурте вăрман хатĕрлевне куллен-кун вăйлатса пыма, государство заданине срокчен тата иртерсе ăнăçлă тултарма май параççĕ.

ВКП(б) Чăваш обкомĕпе Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх çĕнĕ çул умĕн иртернĕ вунăкунлăха хутшăнса, Вăрнар, Йĕпреç, Çĕмĕрле вăрманпромхозĕсем 1951 çулхи вăрман хатĕрлев планне тултарчĕç. Муркаш районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем 1951—1952 çулхи кĕркуннепе хĕллехи сезон планне тултарчĕç. Плана тултарнă колхозсен йышĕ кунтан-кун ÿссе пырать.

Вăрман хатĕрлерĕнче хăйсен ĕçри пултарулăхĕпе чапа тухнă ăста трактористсем, крановщиксем, лебедчиксем, электропăчкăпа ĕçлекенсем, мотористсемпе шоферсем ÿссе ситĕнчĕç. Тракторист Сывулкин, Васильев юлташсен, шофер Осипов, электропăчкăпа ĕçлекен Царегородцев, крановщик Друзин юлташсен пархатарлă ĕçĕсене пĕтĕм çĕршыв пĕлсе тăрать. Нумай механизаторсем вĕсен опычĕсемпе паллашаççĕ, вĕсенчен ĕçлеме вĕренеççĕ.

1951—1952 çулхи вăрман хатĕрлевне республика иртнĕ çулхисемпе танлаштарсан чылай лайăхрах тытăнчĕ пулсан та, вăрман хатĕрлевĕнче хăшпĕр улшăнусем тунă пулсан та паянхи хăвăртлăхсем умра тăракан ыйтусене тивĕçтерме пултараймаççĕ. Чылай вăрманпромхозсем, сăмахран, Первомайски, Шăмăршă, Алтышево, Пăрачкав вăрманпромхозĕсем çаплах юлса пыраççĕ. Асăннă вăрманпромхозсенче механизмсене ĕçлеттерессите, колхозсенчен пыракан ĕç вăйĕпе усă курасси те тивĕçлĕ вырăнта тăмасть. Çавăн пекех районсенчи, уйрăмах Красноармейски, Кувакино, Вăрмар, Елчĕк, Тăвай районĕсенчи партипе совет организацийĕсем йывăç касса хатĕрлес тата каснă йывăça çул хĕррине илсе тухас, турттарса кăларас тĕлĕшпе çаплах кирлĕ пултарулăхпа ĕçлемеççĕ.

Малта пыракан районсемпе колхозсен опычĕ çакна кăтартать: кашни район, кашни колхоз ĕçе тивĕçлипе тытăнсан, вăрман хатĕрлемелли плана срокчен чылай малтан тата иртерсе тултарма пултарать Паллах, йышăннă обязательствăсене срокчен тултарасси хăй тĕллĕн пулма пултаракан ĕç мар. Çĕнтерÿ нихçан та хăй тĕллĕн килмест, ăна кĕрешсе илмелле, тесе вĕрентет И. В. Сталин юлташ Сталин юлташ умĕнче илнĕ социализмлă обязательствăсене чыслăн пурнăçлас тесен, вăрман промышленность руководителĕсен те, районсенчи партипе совет органĕсен руководителĕсен те нумай вăй хурса ĕçлемелле пулать. Большевиксемшĕн çĕнсе илме пултарайман йывăрлăхсем, крепоçсем çук. Çак чăнлăха туйса вăрман хатĕрлевĕнче те пĕтĕм вăя, хăвата, пултарулăха хурса ĕçлени кирлĕ. Тата çакна асра тытас пулать: апир вăрман хатĕрлев планне хăвăртрах тултарсан, ялхуçалăх ĕçĕсем валли туртăм вăйĕпе ĕç вăйĕ пушатса çуракине лайăхрах хатĕрленсе тухма пултаратпăр. Вăрман хатĕрлевне ялхуçалăх ĕçĕсенчен уйăрма çук. Çавăнпа та вăрман хатĕрлев планне тултарман вăхăтрах вăрман ĕçлеме туртăм вăйĕ те, ĕç вăйĕ те ямасăр тăракан колхозсен, сăмахран, Вăрмар районĕнчи хăшпĕр колхозсен руководителĕсем пысăк йăнăш тăваççĕ. Вăрман хатĕрлев планне тултарассинчен пĕр колхоз та хăтăлма пултараймасть. Ял Совечĕсен, колхоз правленийĕсен, пуçламăш парторганизацисен, районсенчи партипе совет органĕсен вăрман хатĕрлев планне кашни колхоз, кашни район тăрăх вăхăтра тата пур ĕçсем енĕпе те тултарма кирлĕ мерăсем йышăнмалла

Вăрман хатĕрлевĕ хăйĕн ответлă тапхăрне кĕчĕ. Январь—вăрман хатĕрлевĕн ăнăçлăхне татса паракан уйăх Çак уйăхри ĕçсенчен вăрман хатĕрлевĕ енĕпе республика аслă Сталин умĕнче илнĕ социализмлă обязательствăсене чыслă пурнăçласси килет.

Вăрман хатĕрлев планне срокчен тата иртерсе тултарасси, чи малтан, парти организацийĕсем ĕççыннисене халăхи вăхăтра Тăван çĕршыва йывăç мĕн пек кирлĕ пулни çинчен тĕрĕс ăнлантарса панинчен килет. Вăрман хатĕрлекен рабочисемпе колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе нихçанхинчен те ытларах вăйлатар

Тăван çĕршыва коммунизм стройкисем валли йывăç нумай кирлине асра тытса, Сталин юлташ умĕнче илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн кĕрешĕве тата ытларах вăйлатар.

Тăван çĕршыва йывăç кирлĕ таран хатĕрлесе парар.

Вăрман хатĕрлев планне кашни колхоз, кашни район. кашни вăрман пункчĕ, *кашни вăрманпромхоз тăрăх тултармалла* тăвар. Çапла вара совет çыннисен сăмахĕсемпе ĕçĕсем пĕр-пĕринчен уйрăлманнине тата тепĕр хут кăтартса парар.

ХИСЕП ХĂМИ

Чăваш АССР Ялхуçалăх министерстви тата ĕççынни депутачĕсен район Совечĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, обществăллă продуктивлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана тултарнă, выльăх-чĕрлĕх валли лайăх çурт-йĕр тата апат çителĕклĕ хатĕрленĕ малта пыракан çак колхозсене республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

ПĂРАЧКАВ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

30. **Ленин ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ А. Ф. Юдин юлташ, парторганизаци секретарĕ Н. П. Овчинников юлташ, ферма заведующийĕ Н. Я. Кузнецов юлташ).

31. **«Красный пахарь» колхоз** (председателĕ В. М Быков юлташ, парторганизаци секретарĕ А. И. Никитин юлташ, ферма заведующийĕ Н. А. Волков юлташ).

32. **«Луч» колхоз** (председателĕ М. П. Скотников юлташ, парторганизаци секретарĕ А. М. Наумов юлташ, ферма заведующийĕ А. М. Наумов юлташ)

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

33. **Маленков ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ А. Н. Сыромятников юлташ, парторганизаци секретарĕ Н. Г. Герасимов юлташ, фермăсен заведующийĕ П. Н Порфирьев юлташ).

34. **Андреев ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ П. Я. Сидоров юлташ, парторганизаци секретарĕ Ф. И. Малебейкин юлташ. фермăсен заведующийĕсем: И. Н. Савельев тата О. Н Инлейкина юлташсем).

35. **Мичурин ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ Г. С. Кудряев юлташ, фермăсен заведующийĕ А. Е. Афанасьев юлташ).

КОМСОМОЛЬСКИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

36. **Калинин ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ Т. И. Иванова юлташ, парторганизаци секретарĕ И. И. Яковлев юлташ, фермăсен заведующийĕсем: Н. А Федоров. Н. Г. Добров юлташсем).

37. **«Красная звезда» колхоз** (председателĕ П. Я. Яковлев юлташ, парторганизаци секретарĕ В М. Деревягина юлташ. фермăсен заведующийĕсем: С. М Родионов, В К Акчурин. Е. М. Акчурина юлташсем).

38. **«Хунав» колхоз** (председателĕ М. Е. Кузнецов юлташ, парторганизаци секретарĕ Н. А. Павлов юлташ ферма заведующийĕ И Я. Тихонов юлташ).

39. **«Искра» колхоз** (председателĕ Н А. Матросов юлташ, парторганизаци секретарĕ Т Г. Миронова юлташ, фермăсен заведующийĕсем. С. П. Зайцев, М. П. Дьяконова юлташсем).

Механизаторсен обязательствисем

ИШЛЕЙ МТС-ра ĕçлекен механизаторсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта 80 çын пулчĕ МТС директорĕ А. Чупраков юлташ 1951 çулăн итогĕсемпе 1952 çулхи задачăсем çинчен доклад туса пачĕ. Докладчик. çавăн пекех туха калакан юлташсем çакна палăртрĕç: Шупашкар районĕнчи МТС-па социализмла ăмăртса ĕçлесе, 1951 çулта Ишлей МТС-ĕ мала тухрĕ. Шупашкар МТС-ĕ çулталăкри плана пурĕ те 85 процент çеç тултарнă пулсан. Ишлей районĕнчи механизаторсем 108.1 процент тултарнă

Анчах Ишлей МТС-ĕн ĕçĕнче те çитменлĕхсем пур-ха. Пысăк çитменлĕхсенчен пĕри вăл кĕрхи çĕртме тумалли плана тултараймани тата авăн çапмалли задание пурнăçлайманни пулать. Çавăн пекех 1952 çулхи çуракине хатĕрленес ĕçсем те кирлĕ пек хăвăртлăхсемпе пулса пымаççĕ Тракторсем юсас ĕç юлса пырать. Çавăн çинчен Шупашкар МТС-ĕнчен килнĕ рабочисен профсоюз комитечĕн председателĕ Разанов юлташ та чарăнса тăчĕ.

Совет Союзĕнчи малта пыракан трактор бригадисен бригадирĕсем МТС-сенчи мĕнпур трактор бригадисен бригадирĕсене, трактористчĕсене, прицепщикĕсене тата ытти работникĕсене чĕнсе çырни çине ответлесе Ишлей МТС коллективĕ 1952 çулта Шупашкар МТС-ĕпе социализмла ăмăртса ĕçлеме килĕшрĕ, çĕнĕ обязательствăсем илчĕ. Механизаторсем тракторсемпе вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене мартăн 30-мĕшĕ тĕлне, комбайнсемпе молотилкăсене тата жнейкăсене вăхăтра юсаса пĕтерме пулчĕç, СХТЗ тракторпа 650 гектар, НАТИ тракторпа 1.000 гектар, ДТ-54 тракторпа 1 100 гектар сухалама сăмах пачĕç. Кашни комбайнпа 140 гектартан кая мар тырпул вырса пухмалла, горючипе сĕрмелли япаласем виçĕ процент перекетлемелле, ĕçе тума ларакан хака пĕр процент йÿнетмелле.

МТС-ра çĕнĕ техникăпа агротехникăна ăнкаре 6 сехетрен кая мар вĕренес ĕçе организациелеççĕ.

В. МАЛЫШЕВ.
В. ЧЕРНОВ.

Агрозоотехника курсĕсен ĕçне лайăхлатмалла

ЧУРАЧАК. Районти колхозсенче агрозоотехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курссем 28 организациленĕ. Уйрăм колхозсенче занятисем йĕркеллĕ пулса иртеççĕ.

Анчах чылай агрономсемпе зоотехниксем хăйсене шанса панă ответлă ĕçе питĕ çителĕксĕр туса пыраççĕ. Акă, А. Виссарионов агронома «Совет» колхозри агротехника курсне ертсе пыма çирĕплетнĕ. Вăл 1951 çулта пĕр занятии те иртермен. МТС-ри участокăн агрономĕ Г. Гаврилов юлташа «Авангард» колхозра агротехника курсĕн ĕçне йĕркелеме хушнă, анчах та вăл мĕн пурĕ те 2 занятии çеç иртернĕ. А. Тимофеев, А. Афанасьев, Н. Прокопьева агрономсем те хăйсене çирĕплетсе панă курссенче 2 шер занятия çеç иртернĕ.

Зоотехника курсĕсен ĕçĕнче те пысăк çитменлĕх пур. С. Максимов зоотехника «Слава» колхозри виçĕ çуллăх зоотехника курсне ертсе пыма уйăрнă. Вăл ку тарана çитсе пĕр занятии те иртермен. М. Васильева зоотехникăн Киров ячĕпе тăракан колхозри курсăн ĕçне йĕркелесе пымалла. Вăл вара ячĕшĕн икĕ занятии иртернĕ те лăпланса ларнă. В. Матвеева, В. Уласв тата ытти специалистсем те хăйсен тивĕçне пурнăçламаççĕ, занятисене вăхăтра, лайăх иртерессишĕн тăрăшмаççĕ.

Ялхуçалăх пайĕн колхозниксене агрономи наукине тата зоотехникăна вĕрентес ĕçе вăйлатмалла.

А. ИВАНОВ.

Колхозсенчен пĕлтереççĕ

МУРКАШ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз 1951 çулта вăйлă тырпул туса илчĕ. Кашни гектартан вăтам шутпа 16,5-шер центнер тĕштырă, 6-шар центнера яхăн кантăр вăрри тухнă.

1952 çулта пысăк тухăçлă тырпул çитĕнтерес тесе, колхозниксем кĕркуннех çуракине большевикла хатĕрленме тытăнчĕç. Халиччен уя 2.500 лав ытла тислĕк кăларнă. Тислĕке торфпа хутăштарса компост тăваççĕ. Вырăнти ытти удобренисене пухас ĕç те ăнăçлă пырать.

И. КОСТИН.

КОМСОМОЛЬСКИ. Молотов ячĕпе тăракан колхоз лаша ĕрчетмелли плана çултан-çул иртерсе тултарать. Лашасене лайăх пăхса усранăшăн, тихасене сывă çитĕнтернĕшĕн конюхсене ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх тыра нумай тивет. Г. Никитин, А. Павлов, П. Арсентьев тата ытти конюхсене çĕршер килограмм тырă хушса панă.

Н. ИВАÇОВ.

ТĂВАЙ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз çулсеренех пысăк тухăçлă тырпул туса илет. колхоз хуçалăхĕ тĕрекленсех пырать. Çавăнпа пĕрлех колхозниксен пурнăçĕ те лайăхланса, культурăланса пырать. Кăçал колхозниксем хăйсене валли çĕнĕрен 18 пÿрт лартрĕç. Юлашки икĕ çул хушшинче колхозра 35 колхозник çемйи çĕнĕ пÿртсене пурăнма кунă.

В. ИГНАТЬЕВ.

В. И. Ленин Сочиненийĕсен çирĕм пиллĕкмĕш томне азербайджан чĕлхипе пичетлесе кăларнă

АЗЕРБАЙДЖАН ССР-ĕнчи государство издательстви В. И. Ленин Сочиненийĕсен çирĕм пиллĕкмĕш томне азербайджан чĕлхипе пичетлесе кăларнă.

Кĕнекене вырăсларан азербайджан чĕлхи çине ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Маркс — Энгельс — Ленин Институчĕн Азербайджанри филиалĕ куçарса хатĕрленĕ. (ТАСС).

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ

А. М. Токарев юлташа Чăваш АССР Çутĕç министрĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Александр Михайлович Токарев юлташа Чăваш АССР Çутĕç министрĕ пулма уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председатель заместителĕ Д. МИТЬКОВ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1952 çулхи январĕн 4-мĕшĕ.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

В И. Ленин ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх академийĕн действительнăй членĕ, Сталинла премии лауреачĕ А. Н. Костяков «Основы мелиорации» ятлă учебник çырнă. Çак учебникшĕн ăна В. Р. Вильямс академик ячĕпе паракан пĕрремĕш премие памалла тунă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: А. Н. Костяков (сулахайран виççĕмĕшĕ) Мускаври шыв хуçалăх инженерĕсене вĕрентсе хатĕрлекен институт студенчĕсене консультаци парать.

В. ШАРОВСКИЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Институтри ученăйсем коммунизмăн аслă стройкисене пулăшаççĕ

Мускаври В. В. Куйбышев ячĕпе тăракан инженерно-строительнăй институт 1952 çул валли наукăпа тĕпчев ĕçĕсен планне туса хатĕрленĕ.

Институт коллективĕ коммунизмăн аслă стройкисене наукăпа техника енĕпе ытларах пулăшма йышăннă Ученăйсем пысăк хăватлă экскаваторсен конструкцине лайăхлатас, экскаваторсемпе пысăкрах тухăçлăхпа ĕçлемелле тăвас, плотинасен айккисене тата çырансене лайăхрах майпа çирĕплетмелле тăвас, çĕр купаласа тăвакан сооруженисене çирĕпрех тата йÿнерех майпа тăвас, хурçăран тăвакан конструкцисене лайăхлатас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Кунсăр пуçне, дипломлă ĕçсем çырмалли тематикăна коммунизмăн аслă стройкисене тунă çĕрте пысăк вырăн йышăнса тăракан темăсене кĕртнĕ.

Институтăн аслă курсĕсенче вĕренекен студентсем темиçе çĕр çын Сталинградри, Куйбышеври тата Каховкăри гидроэлектростанцисене тунă çĕрте практикăра пулаççĕ. (ТАСС).

Тырпула шăварса ÿстермелли çĕр лаптăкне ÿстерсе пыраççĕ

КУРСК, январĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Курск облаçĕнче 11 вырăнта уйри тырпула шăварса ÿстермелли системăсем тунă. Государство вăйĕпе тунă çав системăсене правительство комиссийĕ йышăннă. Юлашки çулсенче государство вăйĕпе тунă системăсем тата колхозсем уйри тырпула шăварса тăма тунă станцисем çитес çуркуннерен пуçласа 25 пин гектар çĕр çинче тырпула шăварса ÿстерме тытăнаççĕ.

Облаçри пур районсенче те шăварса тăмалли çĕр лаптăкĕсемпе лайăх усă курма хатĕрленеççĕ. Курск хулинче усă курсра колхозниксем шăварса тăмалли уй-хирте тырпул ÿстерме вĕренеççĕ. Чылай районсенче колхозниксене тырпула шăварма вĕрентекен курссем уçăлнă.

МТС-сенчи механизаторсем шăварса тăмалли уй-хирсенче ĕçлеме машинăсем хатĕрлеççĕ. Машина-трактор станцийĕсенчен çурри ытла канав чавмалли тата шыв ярса тăмалли йĕрсем тумалли машинăсем çителĕклĕ кÿрсе килнĕ.

Молдаври чи лайăх трактор бригади

РЫБНИЦА (Молдаван ССР-ĕ), январĕн 5-мĕшĕ (ТАСС) Воронковăри Ленин орденлĕ МТС хăй ĕçлесе паракан колхозсенче 1951 çулта ĕçлени çинчен отчетсем туса пама тытăннă. МТС-ри трактор бригадисем пурте ĕç планне иртерсе тултарнă. Колхозсене план тăрăх палăртниччен 18 пин гектар ытларах çĕр ĕçлесе панă, горючи 50 тонна перекетлесе хăварнă. Пур йышши тырпулсем те пысăк тухăçлă пулнă.

Александр Парфентьев ертсе пыракан бригада уйрăмах пысăк çитĕнÿ тунă. Бригада кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа (çемçе суха çине куçарса шутласан) 1.414 гектар чухлĕ ĕç тунă. Çапла вара, Александр Парфентьев бригадинчи механизаторсем вăрçă хыççăнхи вăхăтра Молдавире чи пысăк тухăçлăхпа ĕçленĕ.

Иртнĕ çуркуннехи малтанхи кунсенчен пуçласах А. Парфентьев бригади çĕршывра паллă механизатор Иван Буяев мĕнле ĕçленине тимлĕ сăнаса тăнă. Сехет графикĕ тăрăх ĕçлени çитĕвÿ тумалли никĕс пулнă. Тĕп ĕçсене тунă чухне мĕн чухлĕ вăхăт иртнине бригадир хронометраж туса пынă, вара трактористсемпе пĕрле çав ĕçсене тумалли вăхăта чакарасси çинчен сÿтсе явнă. Ĕç кунĕпе лайăх усă курни. кашни минутра тухăçлă ĕçлени машина водителĕсене сменăри нормăна 50—80 процент иртерсе тултарма май панă. Пысăк çĕр лаптăкĕсем çинче ĕçлени трактористсене ĕç тухăçлăхне тата 20 процент ÿстерме май панă.

Бригадăри механизаторсем машинăсене *яланах лайăх пăхса усрама социализмлă обязательство илнĕ. Прицепщиксем пурте* тракторист пулса ĕçлеме вĕренсе çитнĕ. *Çапла май тракторсем ĕçлемесĕр тăрас вăхăт* иртерми пулнă.

Тракторсене тата вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли инвентаре график тăрăх пăхса тухса юсаса пынă.

А. Парфентьев бригади ĕçлесе паракан Калинин ячĕпе тăракан колхоз , çĕртме туса кĕрхи тырăсем акнă пусăра кашни гектартан 25 центнер, ытти участоксем çинче—19-шар центнер тырпул пухса кĕртнĕ.

А. Парфентьев бригадине, Молдаван ССР Ялхуçалăх министерстви тата МТС-семпе çĕрĕç органĕсенчи работниксен профсоюзĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне панă.

Аму-Дарья çинче пăрахутсем çÿреççĕ

ЧАРДЖОУ, январĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Хальхи вăхăтра çĕршыври ытти юханшывсем хулăн пăрпа витĕннĕ. Аму-Дарья çинче çаплах пăрахутсем çÿреççĕ. «И. Сталин» ятлă пăрахут Чарджоуна пырса çитнĕ Вăл Ходжейли пристанĕнчен (Кара-Калпак АССР-ĕ) çĕр мамăкĕ тата ÿсентăран çăвĕ тиенĕ 4 баржа илсе килнĕ. Аму-Дарья юханшывĕн тури пайĕнче «20 лет Октября» ятлă пăрахут çÿрет, вăл хлопчатник вăрри тата минераллă удобренисем кÿрсе килет.

Вăтам Азири юханшывсем çинчи пароходство Туркменири тĕп канал строительстви валли грузсем вăхăтра кÿрсе тăрать.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Активпа тачă çыхăнса ĕçлет

Сĕнтĕр районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци пысăк мар, унта пурĕ 9 коммунист. Пуçламăш парторганизаци колхозри активпа тачă çыхăнса ĕçленипе хăйĕн кĕрешÿри пултарулăхне вăйлатать.

Парторганизаци (секретарĕ С. Гаврилов юлташ) иртнĕ çулхи 11 уйăх хушшинче парти пухăвĕсене 19 хут иртернĕ. Вăл шутран уçă пухусем 8 пулнă.

Партин уçă пухăвĕсене тăтăшах иртерни колхоз умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама колхозниксен анлă массисене мобилизацилес ĕçре пысăк выран йышăнса тăрать. Уçă пухусенче общество-политикăллă тата производствăллă ыйтусем сÿтсе яваççĕ. Парторганизаци пухусенче йышăннă решенисене пурнăçлама актива вăхăтра мобилизацилет.

1951 çулхи декабрь уйăхĕнче вăрман хатĕрлев ĕçĕ мĕнле пыни çинчен уçă пухура сÿтсе явнă. Пухăва коммунистсемсĕр пуçне партире тăман активистсем те пынă. Парти пухăвĕ вăрман хатĕрлев планне тултарма конкретлă решени йышăннă. Коммунистсен уçă пухăвĕн решенине пурнăçлама правлени часах тивĕçлĕ мерăсем йышăннă. Вăрман ĕçлеме çĕнĕрен 15 лав хушса янă. Çакăн хыççăн ĕçре палăрмалла улшăнусем пулчĕç. 1952 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 110 процент, йывăç турттармалли плана 80 процента яхăн тултарчĕ. Парторганизаци ĕçĕнче кун пек тĕслĕхсем сахал мар. Нумаях пулмасть парторганизацин уçă пухăвĕнче комсомол ĕçне лайăхлатасси çинчен сÿтсе явнă.

Уçă пухусенче йышăннă решенисем çинчен коммунистсем уй-хир бригадисенче тата фермăсенче пулса колхозниксене ăнлантарса параççĕ.

Парторганизаци çумĕнчи агитколлектив 19 агитатора пĕрлештерсе тăрать. Вĕсенчен нумайăшĕ партире тăман активистсем. Парторганизаци агитаторсен ĕçне куллен тĕрĕслет, вĕсене ĕçлеме вĕрентет. Агитаторсем колхозниксене тĕнчери лару-тăру çинчен, партипе Совет правительствин политики çинчен, Тăван çĕршывра, республикăра, районта пулса иртекен пăлтăрсем çинчен, коммунизмăн аслă стройкисем çинчен каласа пăраççĕ, каласусемпе докладсем иртереççĕ. Агитаторсенчен уйрăмах Ф. Гаврилов, Г. Леймов, К. Князев, В. Егорова, С. Романов, М. Салдыркин юлташсем лайăх ĕçленине палăртмалла.

Массăллă ăнлантару ĕçне тăтăшах туса пынă май, колхоз членĕсен политикăллă тата производствăллă активлăхĕ ÿссех пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем агитаторсенчен кашни каласу е доклад хыççăн нумай ĕçсем çинчен тĕплĕ ыйтса пĕлеççĕ.

Колхоз хуçалăхĕ куллен тĕрекленет. Артель обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана пур выльăхсем енĕпе те иртерсе тултарнă. Иртнĕ çулта сыснасемпе чăх-чĕп валли çĕнĕ витесем тунă. Выльăх-чĕрлĕх пăхнă çĕрте 3 коммунист ĕçлет. Вĕсем те ытти коммунистсем пекех партире тăман колхозниксене лайăх пример кăтартаççĕ.

Парторганизаци кашни коммуниста партиллĕ ĕçе хутшăнтарма тăрăшать. Коммунистсем партпорученисене вăхăтра пурнăçлаççĕ. Коммунист К. Князев юлташ пропагандист пулса ĕçлет. Вăл занятисене йĕркеллĕ иртерет, вĕренекенсене çирĕп пĕлÿ парать. Ф. Гаврилов коммуниста колхоз членĕсем хушшинче укçа-тенкĕ пухас ĕçе вăйлатма поручени панă. Вăл çак поручение чыслă пурнăçларĕ. 1952 çулхи январĕн 1-мĕшне кашни колхозник Тăван çĕршыв умĕнчи укçа-тенкĕ парăмне пур тÿлевсем енĕпе те парса татнă.

Парторганизацин çак кунсенче пулса иртнĕ отчетпа суйлав пухăвĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, парторганизацин ĕçĕ лайăхланса пынине кăтартса пачĕ. Калас пулать, коммунистсем хăйсен ĕçĕпе мухтанмарĕç, ÿсĕмсене большевикла хак пачĕç. Пухура кашни коммунист сăмах тухса каларĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ ĕçри çитменлĕхсене тата вĕсене пĕтермелли майсене кăтартса пама тăрăшрĕç. Коммунистсем парторганизаци секретарĕ пулса ĕçлеме С. Гаврилов юлташах суйларĕç.

Ф. МАЛЫШКИН.

Парторганизаци рольне ÿстерессишĕн

Советски районĕнчи Шĕмшешри территориллĕ пуçламăш парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕ парторганизаци секретарĕн Д. Чугунов юлташăн докладне сÿтсе яврĕ.

Парторганизаци шкулта тата ялти ытти учрежденисенче ĕçлекен коммунистсене пĕрлештерсе тăрать. Парторганизаци çумĕнче 20 çынтан тăракан агитколлектив ĕçлет. Агитаторсем ĕççыннисем хушшинче тăтăшах агитациллĕ-массăллă ĕç тăваççĕ. Лекторсен группи иртнĕ çулта 7 лекци тата 79 доклад иртернĕ. Учитель-коммунистсем вĕрентÿ ĕçĕнче лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Калас пулать, парторганизаци ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем те пур-ха. Савна ял Совет территорийĕнче кĕрекен чылай учрежденисем хăйсен ĕçĕсене кирлĕ таран туса пырайманнинчен те курма пулать.

Фельдшер пункчĕ ĕççыннисен паянхи ыйтăвĕсене тивĕçтерейместь, сикекен чирчĕре хирĕç ытла та начар кĕрешет. Вулав çурчĕн заведующийĕ А. Шингарев юлташ хăйĕн ĕçне ытла та япăхлатрĕ. Вулав çуртĕнче хаçат-журнал сахал. Кĕнеке шкафĕсем час-часах питĕрĕнчĕк тăраççĕ. Иртнĕ çулта кунта пĕр номер стена хаçачĕ те тухман. Вулав çурчĕ плансăр ĕçлет. Ялта клуб та пур. Анчах вăл ĕçлемест. Ăна хутса ăшăтмаççĕ, юсамаççĕ. Клуб е вулав çурчĕ çумĕнче кружоксем йĕркелемен.

Отчетлă доклад тăрăх тухса каланă юлташсем парторганизаци коммунистсене марксистла-ленинла теорипе хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕç. Парторганизаци çумĕнче «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренмелли кружок организациленĕ. Анчах та унăн ĕçне тĕрĕслесе тăман. А. Романов, В. Кашкиров тата М. Ишменеева коммунистсем занятисене йĕркеллĕ çÿремеççĕ.

Парторганизацире уйрăмах çамрăк коммунистсене большевикла воспитани парас ĕç çителĕксĕр пулса пырать. В. Лахитов, А. Трофимов юлташсем икшер çул ытла парти членĕн кандидатĕнче тăраççĕ. Парторганизаци вĕсене ÿсме çителĕксĕр пулăшать. Отчетлă тапхăрта парти пухăвĕсем те 7 хут кăна пулнă.

Коммунистсем парторганизаци ĕçĕнчи ытти çитменлĕхсене те палăртрĕç, секретаре отчетпа суйлав пухăвĕн решенийĕсене тĕрĕс пурнăçласа пыма хушса хăварчĕç.

Н. АНДРЕЕВ.
Парторганизаци секретарĕн заместителĕ.

Ĕçе тĕрĕс йĕркеленипе

Шупашкар районĕнчи „Красный флот" колхоз председателĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ П. Г. Григорьев юлташ каласа пани

Пирĕн колхоз членĕсем вăрман хатĕрлес ĕçе пысăка хурса хаклаççĕ. Тăван çĕршыва йывăç нумай кирлине лайăх ăнланаççĕ. Кĕркунне колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче эпир вăрман хатĕрлеме опытлă çынсене уйăртăмăр, йывăç турттарма та лайăх лашасем уйăрса пама палăртрăмăр.

План тăрăх пирĕн Буински вăрманпромхозра 1.100 кубометр йывăç касса хатĕрлемелле, 2.000 кубометр çул хĕррине илсе тухмалла пулнă. Районти хăшпĕр колхозсем вăрмана çынсем тата лашасем нумайрах яма тăрăшаççĕ. Уйрăм колхозсенче кашни вăйпитти çынна йывăç хатĕрлес ĕçе хутшăнтарма пăхаççĕ. Çавăн пирки вăрманта ĕçлекенсем час-часах улшăнса тăраççĕ: пĕрисем килеççĕ, теприсем—каяççĕ. Ĕçе ун пек йĕркелени тĕрĕс мар. Кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра колхозра та ĕç сахал мар. Пирĕн колхозри ĕçе те, государство панă задание—вăрман хатĕрлес ĕçе те план тăрăх туса пымалла. Тĕплĕ шутласа пăхнă хыççăн, эпир йывăç касса хатĕрлеме 12 çын, каснă йывăça çул хĕррине илсе тухма 10 çын, пĕренесене лавсем çине тиеме тата купалама 10 çын уйăрса ятăмăр. Бригадăсемпе звеносене ертсе пыма пуçарулăллă та авторитетлă колхозниксене — М. Парамонов, Б. Володин, А. Владимиров, А. Парамонов юлташсене çирĕплетрĕмĕр. Колхозниксемпе пĕрле вăрмана эпĕ те кайрăм. Вăрманта ĕçлекен колхозниксем валли апат-çимĕç, лашасем валли утăпа сĕлĕ леçсе пама ятарласа звено уйăртăмăр. Ку звено вăрмана апат-çимĕç вăхăтра леçсе тăчĕ.

Бригадăсем, звеносем, колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăрту вăйлă саралчĕ. Кун каçиччен кам мĕнле ĕçленине каçхине тишкерсе тухаттăмăр, малта пыракансен опытне пĕтĕçтерсе сарма тăрăшаттăмăр. Колхозниксем ĕçри çитменлĕхсене хытă критикăлатчĕç, пĕр-пĕрне тухăçлăрах ĕçлеме чĕнетчĕç.

Йывăça тĕрĕс касса йăвантарса яма пĕлмесĕн, пĕтĕм бригада ĕçĕ чарăнса ларма, инкек-синкек те пулма пултарать. Çавăнпа ку ĕçе тума чи ăста колхозниксене уйăртăмăр. Вĕсем йывăççене сыпăлама, туратсене иртсе çунтарма тата турттарса кăларма майлă йăвантарса пычĕç.

Каснă йывăça турттарма икшер лавçăран звеносем турăмăр, пĕренесене лавсем çине тиеме уйрăм звено икĕ çын уйăртăмăр. Ĕçе çăмăллатса тата хăвăртлатас тесе эпир пĕренесене штабельсе лаша вăйĕпе купаласа пытăмăр. Эпир ĕçе поток меслетне туса пытăмăр. Бригадăсемпе звеносем пĕринчен пĕри тухăçларах ĕçлеме тăрăшрĕç. Ĕçе çавăн пек йĕркелени, колхозниксен хастарлăхĕ пĕрмай ÿссе пыни пире ĕç нормине малтанхи кунсенчех иртерсе тултарма май пачĕ. Норма тăрăх кашни лавçă кунне 3,5 кубометр йывăç çул хĕррине илсе тухмалла. А. Парамонов юлташ ертсе пыракан бригадăри лавçăсем вăтам шутпа 8-шар кубометр, М. Парамонов юлташ ертсе пыракан бригада членĕсем 9-шар кубометр йывăç çул хĕррине илсе тухрĕç. Б. Володинпа А. Иванов лавçăсем унтан та ытларах—10—11-шер кубометр кăларса пычĕç. А. Владимиров юлташ ертсе пыракан звенори йывăç касса хатĕрлекен колхозниксем ĕç нормине куллен 150 процент е ытларах тултарса ĕçлерĕç. Стахановла вунăкунлăх вăхăтĕнче колхозниксем уйрăмах пысăк хастарлăхпа ĕçлерĕç. Декабрĕн 30-мĕшĕ тĕлне эпир вăрман хатĕрлемелли плана иртерсе тултартăмăр.

Вăрман хатĕрлемелли плана ăнăçлă тултарса, колхозниксем Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе чыслă пурнăçларĕç, халăх хуçалăхне малалла аталанма пулăшрĕç. Вăрманта ĕçлесе колхозниксем сахал мар тупăш турĕç. Кашни лавçă куллен 45—55-шер тенкĕ ĕçлесе илчĕ. Вăрманпромхоз лашасем валли куллен 10-шар килограмм сĕлĕ парса тăчĕ. Лашасене лайăх пăхнипе тата апат çителĕклĕ панипе вĕсем самăрăлчĕç. Кашни колхоз вăрман хатĕрлес ĕçе пирĕн пек организацилеме пултарать.

Сăмах майĕн Буински вăрманпромхозри çитменлĕхсем çинчен те калас килет. Вăрманпромхозри хăшпĕр работниксем колхозниксем çине чунсăррăн пăхаççĕ. Эпир пурăннă Полукире поселока хаçатсем илсе пымаççĕ, çăкăр кÿрсе пырас ĕçе йĕркелемен, ОРС ларекĕсенче сахăр, кĕрпе, макарон сайра-хутра çеç пулать. Час-часах краççын та пулмасть. Колхозниксем касса хатĕрленĕ е турттарса кăларнă йывăça куллен йышăнас ĕçе йĕркелемен. Вăрманпромхоз директорĕн Русанов юлташăн çав çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерес пулать.



Волгодонстрой. Красноармейски строительство районĕнчи çĕнĕ поселокра 3,5 пин йывăç лартнă. Халĕ канал айккисенчи вырăнсене 8—12 çул ÿснĕ йывăççене лартаççĕ.
ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: йывăç лартаççĕ.
А. МАКЛЕЦОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ

Суйлавçăсен наказĕсене куллен пурнăçламалла

ПЕРВОМАЙСКИ. Çулталăк каялла районти суйлавçăсем хăйсен депутачĕсене халăх хуçалăх планне ăнăçлă тултарассине организацилеме, район центрĕн тата ялсен сăн-сăпатне лайăхлатма, пурăнмалли çурт-йĕрсем тăвас ĕçе йĕркелеме, халăха вĕрентес тата халăх сывлăхне упрас ĕçе лайăхлатма, суту-илÿ ĕçне халăх ыйтнă пек тивĕçтерме, колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла тĕреклетсе пыма наказсем пачĕç.

Нумаях пулмасть район Совечĕн VI-мĕш сессийĕ çак наказсене пурнăçлас ĕç мĕнле пыни çинчен райсовет исполком председателĕн И. Чудаков юлташăн докладне сÿтсе яврĕ.

Вырăнти Советсен суйлавĕ иртнĕренпе район Совечĕпе ял Совечĕсем суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунă. 1951 çулта 50 койка вырнаçмалăх район больници, Турхан тата Нăрваш Шăхаль ялĕсенче 250—300 çын вырнаçмалăх клубсем туса лартнă, район центрĕнче парикмахерски уçнă. 1951—52 вĕренÿ çулĕнче Пăлапуç Нурăсра çичĕ çул вĕренмелли шкул тунă.

Район Совечĕн депутачĕсем вырăнти промышленность предприятийĕсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе те пысăк çитĕнÿсем турĕç. Аслă Чементи райпромкомбинат, Пăлапуç Пашъелĕнчи «Искра», кивĕ Эйпеçри Ворошилов ячĕпе тăракан промартельсем çулталăкри плана иртерсе тултарчĕç. Вĕсем туса кăларакан продукци пахалăхĕ те чылай ÿсрĕ.

Депутатсем хăйсен суйлавçисемпе тăтăшах тĕл пулаççĕ, вĕсен наказĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе пысăк пуçарулăх кăтартаççĕ. Район Совет депутачĕ С. Г. Первов юлташ ертсе пыракан Йĕрçе Çармăс ял Совечĕ укçа-тенкĕ пухмалли плана кашни кварталта иртерсе тултарать. Е. Г. Кольцов тата П. М. Степанов депутатсем ертсе пыракан «Путь социализма», «Красная поляна» колхозсем çулсеренех вăйлă тырпул туса илеççĕ.

Сессире тухса каланă юлташсем суйлавçăсен сĕнĕвĕсене пурнăçлас ĕçре район Совечĕн пысăк çитменлĕхсем пуррине те кăтартса пачĕç. Акă, тĕслĕхрен, Шăхчари «Коммунар» тата инвалидсен «Передовик» промартелĕсене вăйлатма наказ парса хăварнăччĕ. Анчах та асăннă промартельсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе район Совечĕ пысăк улшăну тăвайман-ха. Çак промартельсем производство планне уйăхран уйăха тултарса пыраймаççĕ, вĕсем туса кăларакан продукци пахалăхĕ те начар.

Суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе райсовет исполкомĕн сывлăх, çул-йĕр, сутĕç тата социальнăй обеспечени, культурăпа сутĕç пайĕсем те çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Районти сывлăх пайĕ трахома чирĕпе кĕрешес ĕçе çителĕксĕр ертсе пырать. Ялсенчи медицина пункчĕсем трахомăпа кĕрешессине тивĕçлипе туса пымаççĕ.

Район Совечĕн депутачĕ, МТС директорĕ А. Смирнов юлташ культурăпа сутĕç пайĕн работникĕсем механизаторсем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе пачах та пулăшманнине палăртать.

Сесси çавăн пекех суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе район Совечĕ тата ял Совечĕсем çумĕнчи яланхи комиссисем çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕ.

Сесси район Совечĕн исполкомне тата унăн пайĕсене асăннă çитменлĕхсене пĕтерме хушса тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

А. ТУКМАКОВ.

„Чăваш Коммуни" хаçатра çырнă хыççăн

„Вăрман хатĕрлевĕнчи чăрмавсене пĕтермелле"

1951 çулти декабрĕн 11-мĕшĕнче пичетленсе тухнă «Вăрман хатĕрлевĕнчи чăрмавсене пĕтермелле» ятлă корреспонденцие Чурачăк райисполкомĕн ларăвĕнче сÿтсе явнă. Район Совечĕн исполкомĕ «Динамо», «Гигант», «Молодая сила» колхозсене вăрман хатĕрлевне вăйлатма хушса решени йышăннă, хаçатри заметка тăрăх райисполком йышăннă решение колхоз членĕсен пухăвĕсенче сÿтсе явма, вăрман хатĕрлевне вăйлатма хушнă.

Асăннă колхозсенчен вăрман хатĕрлевне çураннисем те, лашасемпе те планпа пăхнă чухлĕ хутшăннă.

„Агрозоотехника курсĕсем ĕçлемеççĕ"

ВКП(б) Вăрнар райкомĕ декабрĕн 11-мĕшĕнче «Чăваш Коммуни» хаçатра пичетленнĕ «Агрозоотехника курсĕсем ĕçлемеççĕ» ятлă заметкăра фактсене тĕрĕс кăтартни çинчен пĕлтерчĕ.

Хаçатра пичетленнĕ заметкăна «Гигант» колхоз правлени ларăвĕнче сÿтсе явнă, агрозоотехника курсĕсен ĕçне йĕркеленĕ.

„Чкаловски МТС-ĕ пирки"

«Иртнĕ çулти декабрĕн 14-мĕшĕнче «Чăваш Коммуни» хаçатра пичетленнĕ «Чкаловски МТС-ĕ пирки» ятлă статьяра Чкаловски МТС-ĕнчи пысăк çитменлĕхсене кăтартса панăччĕ.

Чăваш АССР ялхуçалăх министерстви Чкаловски МТС-ĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнни, çакна май МТС иртнĕ çулти тăваттăмĕш кварталта тракторсем юсамалли плана ăнăçлă тултарни çинчен пĕлтерчĕ.

Вăрман паттăрĕсем

II. Сталинград валли

Вăрман чăтлăхĕнче, ĕмĕрне ватăлма пĕлмен ешĕл чăрăшсем хушшинчи сухăр шăрши çапса тăракан вĕр-çĕнĕ çуртра хĕрÿллĕ калаçу пырать. Михаил Николаевич Сысуйкин хăйĕн юлташĕсене Мускава кайса килни çинчен каласа парать. Унăн сăмахне Ардатов тавращĕнчен ялан-лăхах вăрман хатĕрлеме килнĕ вырăссем те, вăхăтлăха Куславкка районĕнчи Ырашпулăх, Илепар, Карач, Елчĕк ялĕсенчен килнĕ чăваш çамрăкĕсем те каçса кайса итлеççĕ.

— Юлташсем, мана аслă Мускавра министр юлташ—эпĕ гвардеецсене шанатăп, Сире Сталин шанать,—терĕ.

Çак сăмахсем Федор Федорович Кильтеевăн чĕри патнех кайса тиврĕç. Уйрăммăнах ăна «гвардеец» сăмах сулăмлантарчĕ. Ара, вăрçă вăхăтĕнче вăл та Михаил Николаевич пекех гвардеец пулнă, ун пекех Сталинград патĕнче çапăçнă, вăл ертсе пыракан дивизион Крыма тăшмантан тасатнă, Польшăна ирĕке кăларнă, Германие çĕмĕрттерсе кĕнĕ, фашизм йăвине тĕпĕ-йĕрĕпех аркатнă. Унăн кăкăрĕ çинче Отечественнăй вăрçăн 1-мĕш степеньлĕ виçĕ орден, II-мĕш степеньлĕ пĕр орден, çичĕ медаль ялкăшаççĕ. Вăрçă нушине вăл та, Сысуйкин пекех, нумай тÿссе ирттернĕ. Апла-тăк, фронтра гвардеец пулнă-тăк, Михаил Николаевич каларăшле, кунта та гвардеец пулмалла.

Федор Федорович, Сысуйкин калаçса пĕтерсенех, ура çине сиксе тăчĕ, сылтăм аллине, çарти йăлапа, малалла тăсрĕ.

— Эпир—мир салтакĕсем! Пирĕн, тÿрĕрен калас, вăрçă пирки шутласа ларма вăхăт та çук: йывăç нумай хатĕрлемелле, çĕнĕ çуртсем тумалла, электростанцисем лартмалла. Пирĕн вăрманпромхоз çĕнĕ задани илчĕ: герой-хулана, Сталинграда çирĕм пилĕк пин кубометр йывăç хатĕрлесе ăсатмалла. Сталинград çинчен, унти стройкăсем çинчен эсир пурте пĕлетĕр.

Çак вăхăтра Кильтеев умне вăрçă хирĕ, Сталинградăн çунакан урамĕсем, ишĕлеишĕле анакан çурчĕсем туха-туха тăчĕç. Вăрçăра вĕсем иккĕшĕ пĕрле пулман. Анчах пурпĕрех, кунта пĕрле ĕçленипе-и тен, Кильтеевшĕн, вăрçăра та вĕсем Сысуйкинпа юнашар тăрса тăшмана хирĕç çапăçнă пек, мĕн ачаран пĕрле выляса кулса ÿснĕ пек туйăнать.

Çакăн пек сăнсем куç умне тухнипе Кильтеев тÿссе тăраймарĕ:

— Вăрман паттăрĕсем, çĕнĕ çĕнтерÿсем патне!—тесе пуçĕпе малалла уртăнса, хĕрÿллĕ сăмах хушрĕ.

* * *

Шавлать, кашлать Кире вăрманĕ, пинпин сасăпа янăрать. Куславкка районĕнчен килнĕ чипер хĕрсемпе матур яшсем 434-мĕш делянкăра хăрнă йывăççене касаççĕ, вăрмана тасатаççĕ. Чупкаласа çеç çÿреççĕ çамрăксем. Сталинградра çапăçнă Сысуйкинпа Кильтеев сăмахĕсем вĕсене те çĕклентерсе янă иккен. Çĕре пĕр йывăç хыççăн тепри лапăлтатса ÿкет, пасека хыççăн пасека тасалать.

— Эй, вăрман касакансем, хăвăртрах эсир, атту халех Сысуйкин персе çитĕ акă! Вăл кĕтсе тăма юратмасть!—васкатать «Дружба» колхозран килнĕ Николай Самарин.

— Васкани чармасть. Килсе çитме те пултарĕ çав. Эпир касса хатĕрленĕ пĕренесене Сысуйкин çеç мар, Иван Егорович та турттарать вĕт. Вĕсем пани хăйсене панă делянкăри йывăça турттарса пĕтереççĕ. Унтан кунта куçаççĕ. Ĕнер Сысуйкин пĕр сменăра 121 кубометр турттарнă. Нормăна 300 процент ытла тултарнă.

Виççĕр процент! Калама кăна çăмăл. Çирĕмпĕр çулхи Галина Арефьева Улатăрта вăрман техникумĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, Бурят-Монголие кайса, икĕ çул вăрман промышленноçĕнче, мастерта ĕçленĕ. Унта та чаплă çынсем пулнă, анчах вăл Сысуйкин пеккине курман.

Галина Арефьева ĕçре ÿссе пыракан çын. Виçĕ уйăх каялла ăна, хăйĕн ĕçне ăнăçлă туса пынине кура, мастертан участокри технорука куçарнă.

Галина вăрман касакансемпе васкаса сывпуллашрĕ, çак вăхăтра вăрманта, унăн хыçĕнче çулăм ялтлатса сикни курăнчĕ.

—Хĕрсем делянкăна тасатса пĕтернĕ, турат çунтараççĕ, — шухăшларĕ Галина. Çулăм вăйлăран вăйлă ялкăшма пуçларĕ. Çак çулăм вара Сталинграда аса илтерчĕ. Вăрçăра вăл хăй нихçан та пулса курман, анчах та вăл вăрçă инкекне пурĕпĕрех лайăх пĕлет. Вĕренсе тухсан вĕсем хăйĕн тантăшĕпе Сталинграда кайса килчĕç. Тантăшĕ унăн çав хулара çуралса ÿснĕ пулнă, ашшĕ-амăшĕ çумĕнче ырă курса пурăннă. Сталинграда çулăм хыпса илсен Гальăн тантăшне Лидăна та ытти тăлăх-туратсемпе пĕрле тыла куçарнă. Лида Улатăра лекнĕ. Унтах вĕренсе тухнă. Фашистсем вĕсен çуртне çунтарса янă. Сталинградра, герой-хулара, вĕсем ишĕлнĕ çуртра пурăнакансене те курчĕç. Апла-тăк вăл çак делянка Лидăсен хули валли, унти паттăрсем валли пулать. Эх, çав йывăça эпир хатĕрленине пĕлсен, Лида мĕн тери хĕпĕртĕччĕ-ши?

Вăл участок начальникĕ патне çитрĕ.

— Федор Федорович, Сталинград валли тепĕр делянкăри вăрмана касса пĕтернĕ—рапорт пачĕ технорук.

— Апла ыран автоçул хĕррине турттарма та юрать?—ыйтрĕ Кильтеев.

— Юрать.

— Эсир ĕлкĕрейместĕр пулĕ тенĕччĕ,—шÿт тăванçи пулчĕ Сысуйкин, начальникпе юнашар лараканскер.

— Сирĕн ĕçсем мĕнле, Михаил Николаевич?—ыйтрĕ технорук.

— Паян ĕнерхи пекех,—ответ пачĕ Сысуйкин,—унтан кăшт шухăша кайнă пек пулчĕ,—ĕçсем мĕнле пынине ыран курăпăр!

Çак вăхăтра çĕрлехи вăрман хушшинче çĕнĕ юрă янраса кайрĕ. Тÿррипе, çак юрра ăста хайласа кăларнине никамăх та пĕлмест пулĕ. Кĕвви те унăн темле шĕпĕлтетсе ларакан лăс çулçăллă вăрмана, илемлĕ пурнăçа, вăрман шавне, ĕç шавне аса илтерет.

Сысуйкин чÿрече патне утса пычĕ, итлерĕ.

—Лайăх юрлаççĕ вĕт, чăвашсем? — ыйтрĕ вăл.

— Тĕлĕнмелле шăрантараççĕ,—ответлерĕ Кильтеев.

— Вăрман çинченех пулмалла,—сăмах хушрĕ Сысуйкин.

Юрă вăрман паттăрĕн кăмăлне каяссăн пулнă пекех, малтанхинчен те хытăрах янрама пуçларĕ:

Ĕçсем ăнса пынă чух
Ешĕнни те сисĕнмест!
Пурнăç ăнса пынă чух
Ĕмĕр иртни сисĕнмест.
Ай, хай, тантăшсем,
Çак вăрманта савнăç пур.
Ĕçлес тесен, юрлас тесен,
Пирĕн пата çитсе кур.

— Федор Федорович, итлетĕп-итлетĕр те эпĕ çамрăксем юрланине, ĕç те маншăн юрă пекех туйăнать. Юратнă ĕç этеме нихçан та ывăнтармасть,—хĕрсе кайса каларĕ Сысуйкин, унтан каллех çамрăксем юрланине итлеме тытăнчĕ.

— Çапла, Михаил Николаевич. Ĕçе юратса тусан, çын хăйне çеç мар, хăйĕнпе пĕрле пурăнакансене те савăнтарать. Калăпăр, акă Рашид Бейбутова илер,—Азербайджан юрăçине. Кама кăна савăнтармасть вăл хăйĕн пултарулăхĕпе, талантĕпе!

Михаил Николаевич юлташĕ сăмахне ăсталла пăрса кĕнине лайăхах тавçăрса илчĕ: пĕрре вăл хăйĕн юлташĕ çавăн пек ăста каласма пĕлнинчен тĕлĕнсе те пăхрĕ, тепре ăна «унăн, Бейбутовăн, талант пур,—эпир мĕн» текелесе хирĕçлесшĕн те пулчĕ. Анчах Федор Федорович, Сысуйкинăн шухăшне сиснĕчех тавçăрса илнипе-и тен, пушшех хĕрсе кайрĕ:

— Пĕр-пĕр ĕç паттăрĕсем пĕтĕм республикăна чапа кăларма пултараççĕ. Калăпăр акă, Азербайджана—Самед Вургун, Каджибеков, Бейбутовсем, Тутарстана — Незип Жиганов, Гумер Баширов пек аслă çынсем, Чăваш республикине—Коротков пек, Зайцев пек çĕрĕç паттăрĕсем, Саратов облаçне—Ферапонт Головатый пек патриотсем чапа кăларнă. Ун пек çынсем пирĕн çĕршывра пинĕ-пинĕпе. Анчах та пĕр пĕччен тăрăшнипе çеç нимĕн те тухмасть. Çавăн пек чаплă çынсене коллективлă ĕç çуратать. Чăваш çĕршывĕ—вăрманлă çĕршыв.

Кильтеев сăмахне каласа пĕтереймерĕ, лăп та шăп хĕрсе кайнă самантра, участокри технорук пÿрте кĕрсе тăчĕ.

— Маттур, Михаил Николаевич, пултаратăн,—кăкăрĕнчен темле чĕтренсе тухакан сассипе хыпаланса сăмах хушрĕ вăл.—Куратна, сан çинчен Мускавра çыраççĕ—«Правда» умстатьинче, — васкаса пĕлтерчĕ технорук.

Федор Федорович хаçата хăй аллине илчĕ те тимлĕ вуласа тухрĕ.

— Каларăм вĕт сана, Миша, пултаратăн тесе. Куртăн-и, «Правда» çырать! Пĕлме çук, тăрăшсан, лауреат та туса хурĕç акă. Вара эсĕ пасăр асăннă паттăр çынсем хăйсен çуралнă çĕршывне чапа кăларнă пекех, хамăр вăрманпромхоза чапа кăларăн.

— Федор, Федюша, — Сысуйкин пĕр самант хыпăнса тăчĕ, унтан сăмахне шыв пек юхтарма пуçларĕ.— Сталинград валли пирĕн вăрманпромхоз делянка хыççăн делянка йывăç касса хатĕрлет. Паттăр хулара эпир хамăр вăя лайăх кăтартрăмăр. Апла-тăк тепĕр хут калатăп, эпĕ ăна Мускавра министра та каларăм, çĕршывшăн, Сталиншăн эпир коммунизм гвардийĕ, мир гвардийĕ пулăпăр, терĕм. Эпир хамăр сăмах çине тăракан çынсем: каланă—тунă!—татса каларĕ Сысуйкин.

Вăрманти шав çĕрле те лăпланма пĕлмерĕ. Çип çапнă пек тÿрĕ çулпа, вăрман хушшипе, пас тытнă хурăнсем, хырсем, чăрăшсем хушшинчен вуншар машина иртсе тăчĕ. Вĕсем Кире станцине материал турттараççĕ. Тулли вагонсем çав йывăça Сталинграда, аслă стройка валли илсе каяççĕ.

Сысуйкинпа Кильтеев урама тухрĕç. Вăрман чăтлăхĕнче машина кĕрлени, фарăсем йăлтăртатса тăни Сысуйкиншăн Мускав куçĕ умне тухса тăнă пекех туйăнчĕ. Вăрман хушшипе иртекен çип çапнă пек тÿп-тÿрĕ çул вара уншăн, Сысуйкиншăн, пĕтĕм Союзăмăр урлă Мускавран пуçласа Инçетри Хĕвелтухăç чиккине çитиччен тăсăлакан мир урамĕ, кĕмĕл сутăпа ялкăшса тăракан савăнăç урамĕ пек туйăнчĕ. Çак сăнсем ăна каллех министр сăмахĕсене аса илтерчĕç.

— Ĕçлемелле, кĕрешмелле! Сталинградшăн, миршĕн, коммунизм стройкисемшĕн, пĕтĕм пĕлĕве памалла, вăя хумалла! — терĕ вăл, тепĕр хут çĕкленсе кайса.

Малалла, мир гвардеецĕсем!

Валентин УРДАШ.

Учительсен канашлăвĕнчен

ВĂРМАР. Çак кунсенче учительсен районти канашлăвĕ пулчĕ. Малтанхи ыйту тăрăх—1951—1952-мĕш вĕренӳ çулĕн малтанхи çур çулĕнче тунă ĕçсен итогĕсемпе малашнехи задачăсем çинчен — районти çутĕç пайĕн заведующийĕ Д. Егоров юлташ, иккĕмĕш ыйту тăрăх—ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн VII-мĕш пленум решенийĕсене пурнăçласа шкулсенчи пионер организацисен ĕçне лайăхлатасси çинчен — ВЛКСМ райком секретарĕ А. Алексеева юлташ докладсем туса парĕç.

Коммунистсен партийĕ Совет государстви тата Сталин юлташ шкулшăн, учительшĕн куллен тăрăшаççĕ. Çакна асра тытса районти чылай шкулсен коллективĕсем кăçалхи вĕренӳ çулĕн малтанхи çур çулĕнче вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче, шкул çулне çитнĕ ачасене вĕрентĕве хутшăнтарас ĕçре палăрмаллах çитĕнӳсем турĕç. Халĕ районти 44 шкулта 8.320 ача вĕренет. Çамрăк рабочисемпе колхозниксем валли район центрĕнче каçхи вăтам шкул уçнă. Ачасене вĕренме тивĕçлĕ условисем туса парас тĕлĕшпе уйрăмах Вăрмарти вăтам шкул, Кив Вăрмарти, Тикешри, Чăрăш Сырмари çичĕ çул вĕренмелли шкулсем тата Паттири, Хĕрлĕ Çырти пуçламăш шкулсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Кив Вăрмарти çичĕ çул вĕренмелли шкулта (директорĕ Г. Викторов юлташ) вĕренекен тăлăх ачасем валли тĕштырă уйăрнă, ăшă тумтир, атă-пушмак илсе панă. Шкулта ача апшĕ-амăшĕсем валли лектори ĕçлет. Кунта шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕренĕве хутшăнтарнă, вĕренекенсем шкула сиктермесĕр çӳреççĕ.

Ленин орденĕ илнĕ Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ Аристовская юлташ нумай çул хушши Паттири пуçламăш шкул заведующийĕ пулса ĕçлет. Ку шкулта ачасене вĕренме пур условисем те пур: классем ăшă, çутă, таса. Вĕренмелли учебниксем, нагляднăй пособисемпе карттăсем çителĕклĕ. Учительсем ача ашшĕ-амăшĕсемпе тачă çыхăну тытаççĕ. Шкулта вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайман пĕр ача та çук.

Анчах районти хăшпĕр шкулсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур-ха. 1951—1952-мĕш вĕренӳ çулĕн çур çулĕнче районти шкулсенче 1.151 ача вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраймарĕ, 13 ачана вĕренĕве хутшăнтарман. Вĕренекенсем валли кирлĕ пек услови туса паманнипе Энтриялĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкултан 4 ача вĕренме пăрахнă, 4 ачана вĕренĕве хутшăнтарман. Кунта вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисем те çуррине яхăн шутланаççĕ.

Кĕлкешри пуçламăш шкул, Кĕтеснерти, Эçпепери, Чупайри çичĕ çул вĕренмелли шкулсемпе Пысăк Енкассинчи вăтам шкул вĕренӳ çулĕн иккĕмĕш чĕрĕкне начар итогсемпе вĕçлерĕç. Ку шкулсенче мĕнпур ачасен пиллĕкмĕш пайĕ вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраймаççĕ.

— Сталин юлташ чĕлхе вĕрентĕвĕн ыйтăвĕсем тăрăх çырнă произведенийĕсене вырăс тата чăваш чĕлхисене вĕрентес ĕçре тĕп вырăна хунă шкулсенче чĕлхене вĕрентес ĕç чылай лайăхланчĕ. Анчах пур шкулсенче те ĕçсем ăнăçлă пулса пыраççĕ теме çук-ха, кăна вырăс чĕлхипе вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисен хисепĕ пысăкки уççăн кăтартса парать, — терĕç пренире тухса калакан Тарасов, Сорокин, Романова юлташсем.

Хăшпĕр учительсем, вырăс чĕлхине вĕрентес ĕçре улшăнусем тăватпăр тесе, ытларах грамматика правилисене вĕрентме тытăннă. Çав вăхăтрах диктантсем, сочиненисемпе изложенисем сахал çыртараççĕ. Словарь ĕçне йĕркелемен. Вырăс чĕлхи вĕрентес ĕçри тепĕр пысăк чăрмав вăл—вырăсла учебниксем çитменни.

— Райпотребсоюзăн кĕнеке сутакан магазинĕсемпе КОГИЗ магазинĕ шкулсен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Базăсенче пур учебниксемпе нагляднăй пособисене те района кӳрсе килмеççĕ,— тет Енкассинчи вăтам шкул директорĕ Степанов юлташ.

Канашлу çутĕç пайĕпе учительсен районти профсоюз комитечĕ кадрсемпе çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕ. «Учительсен кунне» ирттермеççĕ, докладсемпе лекцисем сахал пулаççĕ.

И. ВОЛКОВ.
(Хамăр корр.).

Районти шкулсенче

ЧКАЛОВСКИ. Патша саманинче ĕçсыннисем пурте тенĕ пекех хут пĕлмен. Хальхи Чкаловски районĕн территорийĕнче пулнă шкулсенче 568 ача кăна вĕреннĕ.

Совет влаçĕ пулнăранпа районти ялсем палламалла мар улшăнса çĕнелчĕç. Ĕçсыннисен ачисем пурте шкулсенче вĕренеççĕ. Халĕ районта 3 вăтам шкул, 14 çичĕ çул вĕренмелли шкул, 11 пуçламăш шкул ĕçлеççĕ. Шкулсенче 300 ытла учитель ĕçлет, вĕсенчен чылайăшĕ аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă. Районта педагогика училищи, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен работниксем хатĕрлекен шкул пур. Вĕсем çулсерен çĕршер специалист вĕрентсе кăлараççĕ.

Совет шкулĕнчи учитель пысăк хисепре. Вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн 52 учителе орденсемпе медальсем парса наградăланă, вĕсенчен 4 çын Ленин орденĕ илме тивĕçлĕ пулнă.

Партипе правительство халăха вĕрентес ĕç çине тимлĕ пăхаççĕ, ку ĕç валли государство укса-тенкĕ нумай расходлать. Патша саманинче пĕр шкула тытса тăма çулталăкра 450 тенкĕ укса кайнă пулсан, Патăръелĕнчи вăтам шкулăн 1951 çулхи бюджечĕ 501.200 тенкĕ пулнă.

Халăха вĕрентес ĕç валли районта 1941 çулта 1.236.200 тенкĕ, 1950 çулта 4.343.000 тенкĕ, 1951 çулта 4.618.900 тенкĕ расходланă.

Шкулсемсĕр пуçне, районта ача çурчĕ, ача сачĕ, ача ясли ĕçлеççĕ.

Н. ЮЛДАШЕВ.

Каникул вăхăтĕнчи спорт ăмăртăвĕсем

ÇĔРПӲ. ВЛКСМ райкомĕпе физкультурăпа спорт комитечĕ шкул ачисен хĕллехи каникулĕ вăхăтĕнче тĕрлĕ спорт енĕпе ăмăртусем ирттереççĕ.

Январĕн 3-мĕшĕнче хулара районти шкулсенче вĕренекен йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕсем пулса иртрĕç. Ăмăртăва 14 шкулти йĕлтĕрçĕсен командисем хутшăнчĕç. Пĕрремĕш вырăна Çĕрпӳри вăтам шкулта вĕренекенсем тухрĕç. Ивановăри çичĕ çул вĕренмелли шкулти çамрăк спортсменсем иккĕмĕш, Вăрăмçутри çичĕ çул вĕренмелли шкулти физкультурниксем виççĕмĕш вырăнсене йышăнчĕç.

Январĕн 5-мĕшĕнче районти шкулсенче вĕренекен çамрăк шахматистсен турнирĕ пуçланчĕ. Январĕн 10-мĕшĕнче конькипе чупакансен ăмăртăвĕ пулса иртет. Районти нумай шкулсенче вĕренекен спортсменсем çак ăмăртăва хатĕрленеççĕ.

(Хамăр инф.).

Хамăр республика тăрăх

★

Çĕнĕ меслетпе ĕçлени материала перекетлет

КУСЛАВККА. Пурăнмалли çуртсем тăвакан завод коллективĕ чĕрĕ таварпа материалсем перекетлес тĕлĕшпе паха тĕслĕх кăтартать. Çак кунсенче столярнăй цех коллективĕ Сталинла премн лауреачĕсен А. Губенко, А. Белозерова юлташсен ĕç меслечĕпе усă курса пӳртсен хăшпĕр пайĕсене çыпăçтарса тума тытăнчĕ. Вĕсем халиччен вутта янă хăмае урăх тĕрлĕ материалсен татăкĕсене çыпăçтарса пысăк та паха япаласемех тăваççĕ.

Производствăра çак меслетпе усă курни планран ирттерсе пӳртсем туса кăлармa, государствăна укса-тенкĕ нумай перекетлеме май парать.

М. НИКОЛАЕВ.

Торфяниксен кадрĕсене хатĕрлеççĕ

Султан-çул пысăкланса пыракан торф промышленноçне техникăна лайăх пĕлекен кадрсем нумай кирлĕ.

РСФСР Вырăнти топливо промышленность министерстви Атăл леш енчи торф предприятийĕнче багермейстерсен курсĕсене организацилерĕ. Курсра вĕренекенсем торф кăларнă çĕрте, багерлă-элеваторлă машинăсем çинче ĕçлемелле. Курсра вĕренме Свердловск, Киров облаçĕсенчи, Мари, Удмурт АССР-ĕсенчи торф предприятийĕсенчен килнĕ.

Чăваш АССР-ĕнчи торф предприятийĕсем, вăл шутра Улатăр, Çĕрпӳ торф предприятийĕсем валли 20 багермейстер ытла хатĕрлесе параççĕ.

Кунсăр пуçне, мотористсен курсĕсем ĕçлеççĕ, унта 40 çын ытла вĕренет. Çак кунсенче торф кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен кĕçĕн техниксен курсĕсем уçăлаççĕ.

С. ХРИСТОФОРОВ.

Заочниксен пухăвĕ

Январĕн 3-мĕшĕнче Чăваш академи театрĕнче хĕллехи сессие килнĕ заочник-студентсен пĕрлехи пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта Мире сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен республикăри комитетăн председателĕ К. Е. Евлампьев юлташ Миршĕн тăракансен Пĕтĕм Союзри виççĕмĕш конференцийĕн ĕçĕсем çинчен доклад туса пачĕ.

Чăваш педагогика институт директорĕн заочнăй вĕренӳ енĕпе ĕçлекен заместителĕ В. Канюков юлташ заочниксем иртнĕ вĕренӳ çулĕнче мĕнле вĕренни тата 1952—1953 вĕренӳ çулĕнчи задачăсем çинчен доклад турĕ.

Пуху хыççăн заочниксем спектакль курчĕç.

Ача-пăча сăввисен сборникĕ

Чăваш АССР государство издательстви чăваш халăх поэчĕ Н. И. Шелепи çырнă сăвăсен сборникне пичетлесе кăларнă, ăна «Пирĕн юрă» тесе ят панă.

Сборнике кĕçĕн çулхи ачасем валли çырнă 25 сăвă ытла кĕнĕ. Кĕнекене Михаалис художник картинăсемпе илемлетнĕ.

Кĕнекере 56 стр., тиражĕ—3.000 экз., хакĕ 1 т. 20 пус.

★ ★ ★

Чугун çул работникĕсен библиотеки

УЛАТĂР. Ленин ячĕпе тăракан библиотекăран пăравус машинисчĕсем, вагонниксем тата ытти чугун çул работникĕсем те кĕнекесем илсе вулаççĕ. Библиотека чугун çул работникĕсем хушшинче хăйĕн лайăх ĕçĕпе палăрса тăрать. Вăл политика тата техника ыйтăвĕсемпе çырнă кĕнекесене пропагандăлас тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттерет.

Вулакансене çĕнĕ кĕнекесемпе паллаштарас тесе, библиотека ятарласа выставкăсем хатĕрлет. 1951 çулта ун пек выставкăсем 28 хут тунă. Вулакансем уйрăмах «Совет литератури—тĕнчери чи малта пыракан литература», «Чугун çул транспорчĕн резервĕ» ятлă витринăсене юратса пăхнă.

Вĕренекен чугун çул работникĕсене пулăшас шутпа, библиотека ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн кашни сыпăкĕ тăрăх кирлĕ кĕнекесем хатĕрленĕ. Библиотекăра çавăн пекех В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн пурнăçĕпе ĕçĕсене кăтартса паракан выставка пур.

Вулакансем библиотекăри культурăллă-массăллă ĕçе активлă хутшăнаççĕ. Кунта час-часах вулакансен конференцийĕсене ирттереççĕ. Юлашки вăхăтра Воложин çырнă «Земля кузнецкая», Б. Полевой çырнă «Золото» романсем тăрăх вулакансен конференцийĕсене ирттернĕ. Халĕ библиотека Сталинла премн лауреачĕ Попов çырнă «Сталь и шлак» кĕнеке тăрăх вулакансен конференцине хатĕрленет.

Библиотекăра 10.600 том ытла тĕрлĕ кĕнеке шутланать. Кĕнекесем илме кашни кун 120—130 çын пырать.

Халĕ библиотекăран 1.600 чугун çул работникĕ ытла кĕнекесем илсе вулаççĕ.

А. АЛЕКСЕЕВ.

Колхозсене пулăшма

СССР Министрĕсен Совечĕ Çĕрпӳри государство селекци станцинче лайăхлатнă «Цивильская белая» ăратлă сысна ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлеме Çĕрпӳре государство племрассадникĕ организацилеме йышăннă.

Государство племрассадникĕ Çĕрпӳ, Чурачăк тата Красноармейски районĕсенчи колхозсенче сысна ăраттине лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттермелле. Племрассадникăн научнăй сотрудникĕсем çавăн пекех сысна фермисенче зоотехнически учета йĕркелеме пулăшмалла.

Племрассадник работникĕсем халĕ колхозсенчи сысна фермисемпе паллашма тытăннă. Çĕрпӳ районĕнчи Мичурин ячĕпе тăракан, «Новая жизнь», «1905 год», Сталин ячĕпе тăракан тата Хрущев ячĕпе тăракан колхозсенче пĕтĕмпе 130 ăратлă сысна ами суйласа илнĕ. Асăннă колхозсенче халĕ сыснасем валли уйрăм типовой витесем хатĕрлеççĕ, сыснасене пăхма çак ĕçре нумай çул ĕçленĕ колхозниксене уйăраççĕ.

(Хамăр корр.).

Докладсемпе лекцисем

СОВЕТСКИ. ВКП(б) райкомĕ ĕçсыннисем хушшинчи массăллă-политикăллă ĕçе вăйлатсах пырать. Райкомăн штатра тăман докладчикĕсем колхозсене кайса лекцисем вулаççĕ, докладсем туса параççĕ, калаçусем ирттереççĕ. Вĕсем çак юлашки вăхăтра «Партипе правительство Чăваш республикин ялхуçалăхĕпе промышленноçне тата культурине малалла аталантарассишĕн тăрăшни», «Коммунизмăн аслă çтройкисем—пĕтĕм халăх ĕçĕ», «Пĕтĕм тĕнчери çирĕп миршĕн пыракан хăватлă кĕрешӳ» тата ытти темăсем тăрăх та лекцисем тата докладсем ирттернĕ.

Докладсемпе лекцисем итлеме Степан Разин ячĕпе, Киров ячĕпе тăракан, «Сталинград», «За коммунизм» колхозсенче халăх уйрăмах нумай пухăннă. Райкомăн штатра тăман докладчикĕсенчен П. Ефимов, П. Иванов, П. Смирнов юлташсем чылай колхозсенче лекцисем вуласа панă.

Я. СИГАЙ.

Район центрĕнчи çĕнĕ çуртсем

ЧУРАЧĂК. Партипе правительство тăрăшнипе район центрĕнче çулсеренех çĕнĕ çуртсем хутшăнса пыраççĕ.

1951 çулта район центрĕнче амбулатори çуртне туса пĕтерчĕç. Унта лаборатори тата консультаци памалли кабинетсем пур. Амбулаторире ĕçсыннисен сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе 6 врач ĕçлет. Амбулаторипе юнашар лараканн больница çуртне юсаса çĕрланă.

Пĕлтĕр организациленĕ МТС территорийĕнче, халиччен нимĕн те пулман вырăнта, çĕнĕ çуртсем ӳссе ларчĕç.

1951 çулта район центрĕнче икĕ хутлă пысăк чул çурт туса пĕтерчĕç. Çĕнĕ çурта тума 300 пин тенке ларнă. ВКП(б) райкомĕпе ВЛКСМ райкомĕ валли пысăк та илемлĕ çурт пулать. Унтах парткабинет, лекци вуламалли залсем, библиотека ĕçлемелле.

А. ИВАНОВ.

Пултаруллă машинист

Константин Бедняков юлташ Шупашкарти «Водосвет» трестĕнче 1936 çултанпа ĕçлет. Вăл çамрăклах механик ĕçне юратнă, унпа интересленнĕ.

«Водосвет» электростанцийĕнче ĕçлесе, К. Бедняков юлташ малтанхи çулсенчех хăйĕн пултарулăхне кăтартнă. Хальхи вăхăтра вăл аслă машинист пулса ĕçлет, хăйне шанса панă ĕçе тӳрĕ кăмăлпа туса пырать. Пĕр-пĕр машина кирлĕ пек ĕçлемесен, Бедняков юлташ унăн кăлтăкĕсене çийĕнчех тӳрлетет.

Çак кунсенче Бедняков юлташа щит управленийĕнчи пĕр кăткăс машинăна ĕçе яма хушнă. Пултаруллă машинист машинăна часах ĕçе янă. Анчах машина, кивĕ пулнă пирки, çав-çавах начар ĕçленĕ. Машинист ăна тепĕр хут тĕрĕсленĕ. Вăл машинăн пĕр пайĕ çиййĕнсе тухса ӳкнине палăртнă. Машинăна чарса лартсах юсамалла. Анчах машинăна ĕçлеме чарсан чылай станоксем ĕçлеймен пулĕччĕç. Бедняков юлташ машинăна ĕçлеттерме чармасăрах кирлĕ детале кĕртсе лартнă.

Паллă машинист хăйĕн ĕçĕнчи пуян опычĕпе ытти çамрăк машинистсене те паллаштарать, вĕсене хăй пекех хастарлă ĕçлеме вĕрентет.

В. САВИЦКИЙ.

★

Н. К. Сверчков художник произведенийĕсен выставки

Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Н. К. Сверчков çуралнăранпа 60 çул тултарнă, творчество енĕпе 30 çул ĕçленĕ ятпа, Шупашкарти картинăсен галлерейĕнче художник тунă картинăсен выставки уçăлчĕ. Выставкăра Н. К. Сверчков тунă «Чăваш ялне килнĕ пĕрремĕш трактор», «Вырăссен аслă поэчĕ А. С. Пушкин чăваш ялĕнче», «Хисеп хăми умĕнче», ятлă картинăсем паллă вырăнта тăраççĕ. Çавăн пекех выставкăра «Пионерка», «Юман вăрманĕ», «Вăтă юмансем» ятлă картинăсем пур. Художник выставкăна пурĕ 37 картина тăратнă.

Выставкăна 6 кун хушшинче темиçе çĕр çын пырса курнă.

Çур финалти вăйă

КАНАШ. Кунта шахмат енĕпе республикăра мала тухассишĕн пыракан турнирăн çур финалти вăййи пулса иртрĕ. Ăмăртăва Канаш, Шăхасан, Елчĕк, Вăрнар, Çĕмĕрле, Тăвай районĕсенчи вăйлă шахматистсем хутшăнчĕç.

Пилĕк кун хушши выляна хыççăн малти вырăна иккĕмĕш разрядри шахматист В. Андреев (Канаш) тата виççĕмĕш разрядри шахматист Яковлев (Шăхасан) тухрĕç. Вĕсем 12 очко илме май пур çĕртен 9-шар очко илчĕç. Яковлевпа Дерягин юлташсем иккĕмĕш разряд нормине тултарса 4-мĕшпе 5-мĕш вырăнсене йышăнчĕç.

Я. РОМАНОВ.

Спорт хыпарĕсем

Январĕн 6-мĕшĕнче Шупашкарти «Молния» спорт обществи стадионĕнче стадион хуçисем Хусан хулинчи хоккей командипе РСФСР кубокне илессишĕн ăмăртса вылярĕç.

Вăйă 2:1 шутпа, Шупашкар команди çĕнтернипе вĕçленчĕ.

* * *

Январĕн 6—7-мĕшĕсенче Шупашкарта шкулсенче вĕренекенсен йĕлтĕрпе тата конькипе ăмăртса ярăнмалли, гимнастика тумалли республикăри ăмăртăвĕсем пулса иртрĕç.

Шкулсенче вĕренекенсен республикăри ăмăртăвĕсене 19 районпа хуларан пурĕ 170 çын хутшăннă.

* * *

Хулари физкультурниксем ялсенчи физкультурниксене пулăшасси пирĕн республикăра йăлана кĕнĕ ĕç пулса тăчĕ. Шупашкарти спорт обществисен йĕлтĕрçисем январĕн 6-мĕшĕнче 5 района тухса кайрĕç. Спартаковецсем Красноармейски районĕнчи, «Медик» йĕлтĕрçисем Сĕнтĕр районĕнчи, «Искра» физкультурникĕсем Шăхасан районĕнчи, «Буревестник» йĕлтĕрçисем Чурачăк районĕнчи, Чапаевски поселокри спортсменсем Иш-лей районĕнчи ялсене кайнă. Вĕсем ялти çамрăксем валли йĕлтĕр спорчĕ çинчен лекцисем вуласа параççĕ, ялти йĕлтĕрçĕсемпе пĕрле ăмăртусем ирттереççĕ.

Иртнĕ вырсарникун Улатăр, Канаш, Çĕрпӳ, Етĕрне хулисенчи физкультурниксем те хăйсен районĕсенчи ялсенче пулса, ялти йĕлтĕрçĕсемпе пĕрле ăмăртусем ирттернĕ.

Тĕнчери лару-тăру

ХАВАСЛАНТАРМАН ИТОГСЕМ ТАТА ТĔКСĔМ МАЛАШЛĂХСЕМ

Иртнĕ çулталăкра империалистла лагерьти çĕршывсенче васкасах хĕçпăшал хатĕрлерĕç, çар валли ĕçлесе тăракан хуçалăх туса пычĕç, апат-çимĕçпе япаласен хакĕсем тата налогсем ӳсрĕç, ĕçсĕр тăрса юлнă çынсен йышĕ пысăкланчĕ, ĕçсыннисен пурнăçĕ пур енчен те пĕрмаях начарланса пычĕ. Америкăри «Нейшн» журнал çĕнĕ çул пуçланас умĕн: «эпир иртнĕ çулталăкран нимĕн шеллемесĕр уйăрлатпăр, ку вăл начар çулталăк пулчĕ», тесе çырчĕ.

Пĕрлешӳллĕ Штатсен экономики çинчен Америкăри «Таймс» журнал: «1951 çулхи урокран США хăйĕн экономикине сиенлемесĕр кирлĕ чухлĕ хĕçпăшал хатĕрлеме пултараймманни курăнчĕ», тесе çырать. Англире, Францире тата агрессиллĕ Çурçĕр Атлантика блокне кĕнĕ ытти çĕршывсенче те васкасах хĕçпăшал нумай хатĕрлес ĕçе экономикăна тата ытларах хавшатса, ĕçсыннисен пурнăçне тата ытларах начарлатса пурнăçласа пынă.

«Çу вырăнне тупăсем пулччăр» текен лозунг США-ра влаçра тăракансен тата вĕсем майлисен политикине палăртса тăрать. Çав çĕршывсенчи халăхсем пысăк йывăрлăхсем тӳсеççĕ. Империалистсем çавна шута илмеççĕ. Вĕсем вăрçа хатĕрленес ĕçе кунтан-кун вăйлатса пыраççĕ.

США-н 1951—1952 çулсенчи çар бюджечĕ 1939 çулхи çар бюджетĕнчен 79 хут пысăкрах, налогсем 12 хута яхăн ӳснĕ. Çав вăхăтрах ĕçсыннисен ĕç укçи вăрçă умĕнхинчен 50 процент чакнă. Пĕр çулталăк каялла, «чрезвычайнăй лару-тăру» туса хуни çинчен пĕлтерсе, Трумэн президент американецсене «йывăрлăхсене пĕр пек тӳссе ирттерме» чĕннĕ. Анчах иртнĕ çулталăкра çакă курăннă: ĕçсыннисем чăннипех те йывăрлăхсем тӳснĕ, монополистсем вара тата ытларах пуйса пынă.

США-ра ĕçсыннисене эксплуатацилени вăйланнă. Çавна хирĕç ĕçсыннисем забастовкăсем нумайрах тунипе ответлеççĕ. Иртнĕ çулталăкри малтанхи 10 уйăх хушшинче кăна çĕршывра 4 пин забастовка ытла пулнă. Забастовкăсене 2 миллион çын ытла хутшăннă. Забастовка тăвакансем ĕç укçи ӳстерме, апат-çимĕçпе япаласен хакне йӳнетме тата ĕç условийĕсене лайăхлатма ыйтнă. Автомобиль промышленноçăн центрĕ пулса тăракан Детройтра кăна ĕçсĕр тăрса юлнисен йышĕ 120 пин çынна çитнĕ.

Çĕнĕ çулта та, 1952 çулта та, США-ри ĕçсыннисен пурнăçĕ мĕн чухлĕ те пулин лайăхланас шанчăк çук. Васкасах хĕçпăшал нумай хатĕрлес ĕçе малалла туса пыни çĕршывăн тата Америка халăхĕшĕн экономика енĕпе татах та пысăкрах йывăрлăхсем туса хурĕ.

Англире те васкасах хĕçпăшал нумай хатĕрлеççĕ. Çавна пула çĕршыв экономики нумай вăйсăрланнă. Кашни эрнере пĕрре тухакан «Ньюс Стейтсмен энд нейшн» журнал: «Англи историйĕнче 1951 çул эпир мирлĕ вăхăтра ют çĕршывсенче 11 дивизи тытса усранă малтанхи çулталăк пулчĕ», тесе çырать. 1951—1952 бюджет çулĕнче хĕçпăшал хатĕрлеме паракан укса-тенкĕ хисепне, 1950—1951 çулсенчипе танлаштарсан, икĕ хут ӳстернĕ. Çавна пула ĕçсыннисен пурнăçĕ начарланса пынă, пурнăç шайĕ 25 процент таран чакнă, апат-çимĕçпе япаласем татах та хакланнă, тулашри суту-илӳре Англи парăмĕсем нумай ӳснĕ, ылтăн запасĕсем пĕтсе пынă, ĕçсĕр тăрса юлнă çынсен йышĕ татах та пысăкланнă.

Çĕнĕ çулта пурнăç мĕнле пуласси çинчен «Ньюс кроникл» хаçат: «пурнăç шайĕ татах та ытларах чакĕ, хăрушă пурнăç пулса тăрĕ, выçă пурăнма тивĕ», тесе çырать. Халĕ Англи правительстви апат-çимĕçпе халăха куллен кирлĕ таварсен хакĕсене çĕнĕрен ӳстерме хатĕрленет. халăх сывлăхне сыхлама уйăрса памалли укса-тенкĕ хисепне чакарас ыйтăва пăхса тухать, вăрçа хатĕрленес ĕçри хăвартлăхсене чакарас мар тесе укса тупма ытти «майсене» те шырать.

Франци, Бельги, Дани, Норвеги халăхĕсен тата Хĕвеланăç Европăри ытти халăхсен те 1952 çулта пысăк йывăрлăхсем тӳсме тивет. Çав çĕршывсенче влаçра тăракан ушкăнсем Америка агрессорĕсем хыççăн пырса васкасах хĕçпăшал нумай хатĕрлеме тăрăшаççĕ. Ку вăл ĕçсыннисен пурнăçне начарлатать.

ИНДИРИ СУЙЛАВСЕМ

(Ют çĕршывсенчи хаçатсем çырнă тăрăх)

Индире халĕ вырăнсенчи закон кăларакан органсен тата Инди парламенчĕн суйлавĕсем пулса пыраççĕ. Индие 1947 çулта пайланă, Индипе Пакистан уйрăм çĕршывсем пулса тăнă хыççăн, Индири влаçа Инди наци конгресĕ текен партий хăй аллине илнĕренпе малтанхи хут суйлавсем ирттереççĕ.

Халлĕхе суйлав кампанийĕ уйрăм княжествăсемпе штатсенче пулса пырать. Анчах халех çакă палăрнă: халиччен Инди наци конгресĕ текен партирен суйланнă депутатсем парламентăн пысăк пайĕ пулса тăнă пулсан, хальхи суйлавсенче вара ку партие халăх массисем шанманни ытларах та ытларах палăрать. Ку парти реакциллĕ политика тытса пырать. Çавăн пирки ăна халăх массисем шанмаççĕ. Çавăнпа пĕрлех суйлавсенче халăх массисем хушшинче Индири коммунистсен партийĕ ертсе пыракан демократиллĕ вăйсен влиянийĕ ӳсни курăнать.

Траванкор-Кочин штатĕнчи законсем кăларакан пухăва суйланă çĕрте паянхи кунччен Инди наци конгресĕ текен парти 30 вырăн, сулахайри партисен пĕрлешнĕ блокĕн кандидачĕсем—18 вырăн, никама пăхăнманнисем—7 вырăн, социалистсем—5 вырăн, ытти партисем 2 вырăн илнĕ. Çапла вара, сулахайри партисен блокĕн представителĕсем пухури мĕнпур вырăнсенчен 30 процентне яхăн илме пултарнă. Ку факт уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни çакăнтан курăнать: нумай штатсенче, çав шутра Траванкор-Кочин штатĕнче те, коммунистсен партине хытă хĕсĕрлеççĕ, унта коммунистсен партийĕ вăрттăн ĕçлет.

Инди влаçĕсем сулахайри партисен пĕрлешнĕ блокне суйлав кампанийĕ ирттерме, ирĕклĕ те тĕрĕс суйлавсем ирттерме чăрмантарас шутпа нумай майсемпе тăрăшаççĕ. Коммунистсене суйлав умĕнхи митингсенче тухса калама чараççĕ, вĕсенчен чылайăшне сутсăр-мĕнсĕрех тĕрмене хупнă. «Кросроудс» хаçат влаçсем сулахайри партисен блокĕн кандидачĕсене арестлеме те чарăнса тăманни çинчен пĕлтерет.

Суйлавсене пурте хутшăнмалли йĕрке туни çинчен пĕлтернĕ. Çав вăхăтрах влаçра тăракан ушкăнсем уйрăм çынсене кăна мар, халăхăн пысăк ушкăнĕсене те суйлав прависĕр хăвараççĕ. Индири «Ная сабера» хаçат çырнă тăрăх, влаçсем Телинганра пурăнакан 5 миллион çынна суйлава хутшăнма чарнă, вĕсене помещиксен çĕрĕсене хресченсем хушшинче валеçес ĕçе ырланăшăн суйлав прависĕр хăварнă. Çав княжествăра темиçе миллион хĕрарăма суйлавçăсен списокне кĕртмеççĕ. Çапла, Бихар штатĕнче икĕ миллион хĕрарăма, Раджастан штатĕнче—500 пин хĕрарăма, Уттар-Прадеш штатĕнче 200 пин хĕрарăма суйлавсенче сасăлама чарнă.

Сулахайри партисен пĕрлешнĕ блокĕ суйлавсенче çĕр реформи ирттермелле тăвассишĕн, рабочи класăн пурнăçне лайăхлатассишĕн, Инди халăхне демократиллĕ ирĕклĕхсем памалла тăвассишĕн, Англин Индири капиталĕсене национализацилессишĕн, «Британири нацисен туслăхĕпе» çыхăнса тăма пăрахассишĕн, халăхсем хушшинчи миршĕн тата вĕсем демократиллĕ йĕркепе пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнмалла тăвассишĕн кĕрешет. Çак требованисене Индири ĕçсыннисен анлăрах та анлăрах массисем ырлаççĕ. Ку вăл Индири влаçра тăракан ушкăнсене шиклентерет.

Нумай пулмасть Калькуттăра Индири коммунистсен партийĕн генеральнăй секретарĕ Аджой Гхош сăмах тухса каланă. Вăл Траванкор-Кочин штатĕнчи суйлавсенче сулахайри партисен пĕрлешнĕ блокĕ çĕнтернĕ май Инди халăхĕ хаваслannине палăртнă.

«Траванкор-Кочин штатĕнчи суйлавсенчен правительствăн коммунистсен партине хĕсĕрлемелли политики путланса ларни курăнать. Партин чăннипе вăрттăн ĕçлеме тивет пулин те, вăл сулахайри партисен пĕрлешнĕ блокне ертсе пыма пултарчĕ», тенĕ Гхош.

ЛИВИ НИКАМА ПĂХĂНМАН ÇĔРШЫВ ПУЛСА ТĂНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНĔ ПИРКИ

1951 çулхи декабрь уйăхĕн вĕçĕнче Триполире Ливи никама пăхăнман çĕршыв пулни çинчен пĕлтерсе уяв ирттернĕ. Ĕлĕк Итали колонийĕ пулнă çак çĕршывăн кун-çулĕ çинчен ООН Генеральнăй Ассамблейинче сӳтсе явнăччĕ. Совет делегацийĕ, Ливи халăхĕн интересĕсене шута илсе, пĕр тăхтаса тăмасăр Ливие чăннипех те никама пăхăнман çĕршыв пулса тăма право памалли çинчен каланă, унăн территорийĕнчен ют çĕршывсен çарĕсене илсе тухмалла тата ют çĕршывсен унти çар базисене пĕтермелле тăвас тесе çине тăнă.

Совет делегацийĕн тĕрĕс сĕнĕвĕсене Генеральнăй Ассамблейăн 5-мĕш сессийĕнче Америкăпа Англи блокĕ сирсе янă. Ун вырăнне Ассамблейăна ирĕксĕрлесех Ливие ирĕклĕ çĕршыв пуласси çинчен пĕлтерме 1952 çулхи январь уйăхĕччен тăхтаса тăмалла текен резолюци йышăнтарнă.

Çак ĕçе татса пама тăхтаса тăнипе усă курса, Америка, Англи тата Франци империалисчĕсем Ливирен империалистла виçĕ державăн çар плацдармĕ туса хума каласса татăлнă. США-н, Англин тата Францин влаçра тăракан ушкăнĕсем халĕ те хăйсем Ливире туса хунă йĕркесене пăрахăçласшăн мар тата хăйсен Ливири çар базисене пĕтересшĕн мар пулни çинчен ют çĕршывсенчи хаçатсем уççăнах çыраççĕ. Çапла, Франци малашне те Феццан оазисĕ районĕнче хăйĕн çарĕсене тытса тăма, Себхари, Гатери тата Гадамесри аэродромсене хăй аллинчех хăварма шутлать. Англин Киренаикăри çарĕсем унтах юлаççĕ.

Ассошиэйтед пресс агентстви çакăн çинчен пĕлтерет: çывăх вăхăтра Америка правительстви США авиацийĕн Уиллери базисене хăй аллинчех хăварас пирки Ливипе килĕшӳ туни çинчен пĕлтерĕ, ун вырăнне Америка магначĕсем Трумэн программи текенскерĕн 4-мĕш пункчĕ тăрăх Ливие техника енĕпе пулăшу пама пулаççĕ. Вĕсем хăйсене çĕнĕ çар базисем тума ирĕк панăшăн малтанах тӳлесе хурас шутпа çавăн пек пулăшу пама килĕшеççĕ.

Çапла вара, США, Англи тата Франци империалисчĕсем Ливи тĕлĕшпе çĕнĕ плансем тăваççĕ. Вĕсен планĕсем мирпе никама пăхăнманлăхшăн тăрăшакан Ливи халăхĕн шухăш-ĕмĕтне хирĕçле плансем пулса тăраççĕ.

Д. БОЧАРОВ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕн паянхи пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле тăшмана хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ.

Хĕвеланăçĕнчи фронтра, Чанданьрен сурçĕртерехре, Халăх çарĕн чаçĕсем йышăнса тăракан пысăк пĕлтерĕшлĕ чылай сăртсене тытса илес шутпа тăшман хытă тапăннă, тăшман çарĕсене танксем тата артиллери пулăшнă. Халăх çарĕн чаçĕсем хăватлă хирĕç тăнипе пула тăшман каялла чакнă, çапăçнă вырăнта вилнисемпе аманнисем 800 çын ытла выртса юлнă.

Хĕвеланăçĕнчи çыран çывăхĕнче Халăх çарĕн чаçĕсем Енподо тата Сунидо утравĕсене ирĕке кăларассишĕн кĕрешнĕ çĕрте пысăк çĕнтерÿ тунă. Малтанлăха илнĕ сведенисем тăрăх, унти çапăçусенче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çын ытла вĕлернĕ, амантнă тата тыткăна илнĕ. Тăшманран 100 винтовка ытла, 10 пулемет, 5 тупă, 43 судно, патрон тултарнă ещĕксем 20 ытла тата ытти хатĕрсем тытса илнĕ. Ли Сын Ман вăрăхурахĕсем хĕсĕрленинчен хĕн-хур курса пурăннă 15 пин çынна ирĕке кăларнă. Тăшманăн аркатса тăкнă çарĕсен юлашкисем 3 карап çине ларса тарма хăтланнă, çав карапсене шыва путарнă.

Паян Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтаксен отрячĕсем тăшманăн 4 самолетне персе ÿкернĕ, унччен çав самолетсем Муньчхонь, Аньбень, Саривонь тата Сонним хулисенчи мирлĕ халăх çине бомбăсем пăрахнă çĕре хутшăннă пулнă.

ПХЕНЬЯН, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç халиччenхи вырăнсенчех оборонăра тăрса çапăçнă.

Январĕн 5-мĕшĕнче тăшман Корангпори районĕнче хытă тапăнса атакăсем тума хăтланнă. Халăх çарĕн чаçĕсемпе Китай халăх добровольцĕсем тăшман атакисене сире-сире янă, ăна пысăк сиен кÿнĕ.

Паян Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтаксем тăшманăн 3 самолетне персе ÿкернĕ, унччен çав самолетсем Корейăн хĕвелтухăçĕнчипе хĕвеланăçĕнчи çыранĕсенчи мирлĕ халăх пурăнакан хуласемпе ялсем çине бомбăсем пăрахнă çĕре хутшăннă пулнă.

Интервентсен Корейăри салтакĕсем вăрçăра çапăçасшăн мар

ПХЕНЬЯН, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăпа Англи интервенчĕсем Корейăри фронтра кĕрхинне наступлени тума хăтланса пăхнă. Вĕсен наступленийĕ путланса ларнă, интервентсен пысăк сухату пулнă. Ку вăл агрессорсен лагерĕнчи хирĕçÿсене тата ытларах çивĕчлетĕ. Çавна май салтаксен шухăш-кăмăлĕ нумай пачарланнă, вĕсем вăрçăра çапăçасшăн мар пулни çинчен ытларах та ытларах калаçма пама тытăннă.

«Нодон синмун» хаçат корреспонденчĕ хĕвеланăçĕнчи фронтран çапла пĕлтерет: 1951 çулхи ноябрĕн 4-мĕшĕнчен иртнĕ икĕ эрне хушшинче кăна фронтăн пĕр участокĕнче Англин 28-мĕш бригадин 50 салтакĕ ытла тыткăна парăннă. Тыткăнрисем каласа панă тăрăх, Шотланди полкĕнче кĕске вăхăт хушшинчех 20 салтак хăйсене хăйсем амантнă тата 4 салтак фронтран тарнă. Тепĕр полкра 8 çын хăйсене хăйсем амантнă тата 14 çын фронтран тарнă. Тыткăнри çынсем çакăн çинчен каласа панă: Англи салтакĕсем çак усал вăрçă хăçан пĕтессине пĕлесшĕн, тăван çĕршыва таврăнма ĕмĕтленеççĕ. Ку—Англи салтакĕсен пĕртенпĕр шухăшĕ.

Тыткăна парăннă салтаксем пурте «ООН çарĕсене» американецсен ытти çĕршывсен салтакĕсене, çав шутра акăлчансене те, нимĕн чухлĕ те хисеплемени çинчен пĕлтереççĕ. Тыткăнри салтаксем каласа панă тăрăх, американецсем Англи салтакĕсене кивелнĕ хĕçпăшал тата кивĕ тумтир параççĕ.

Салтаксем хушшинче халĕ çак вăрçăра американецсен интересĕсемшĕн хăйсен пуçĕсене хума килĕшекен айван çынсем сахаллансах пыраççĕ, тенĕ тыткăнри салтаксем.

Империалистсен Корейăри тискерлĕхĕ çинчен Хĕвеланăç Германири буржуалла хаçатсем мĕн çыраççĕ

БЕРЛИН, январĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăпа Англи интервенчĕсем тата Ли Сын Ман çарĕсем Корейăра мирлĕ халăх тĕлĕшпе тискер ĕçсем нумай туни çинчен Хĕвеланăç Германири буржуалла чылай хаçатсем пĕлтереççĕ.

Çапла, Бавари тăрахĕнчи «Френкишер таг» (Бамберг) тата «Изарпост» (Ландсхуд) хаçатсем çакăн çинчен пĕлтереççĕ: иртнĕ çулта Америкăпа Англи интервенчĕсем каялла чакнă чухне Ли Сын Ман полицийĕ Корейăри çамрăксене 700 пин çынна çĕршывăн кăнтăр енне хăваласа кайнă. Вĕсенчен 400 пин çын кăна çĕршывăн кăнтăр енчи лагерĕсене çитнĕ. Ытти çынсем çул çинчех вырăнах е шăнса вилнĕ, чылайăшне çул çинчех персе вĕлернĕ. Кăнтăр Корейăри лагерьте, вĕçĕ пĕтес çук ... картишĕнче, апат-çимĕç çитмен тата ăшă тумтир пулман пирки темиçе çĕр пин çын вилнĕ.

Кăнтăр Корейăри халăхăн шухăш-кăмăлĕ çинчен «Френкишер таг» хаçат çапла çырать: «Çĕршывăн кăнтăрти пайĕнче Ли Сын Ман хăйăн çарĕ çине тери хытă хăйраман çын пулса тăрать. Вăл хăйĕн влаçне полици çине тата американецсем çине таянса çеç пурнăçласа пырать...»

«Изарпост» хаçат: кам Кăнтăр Корейăри влаçсене хирĕç калама е кĕрешме хăять, çавна тĕрмене хупаççĕ, юлашкинчен вăл унтах пĕтет, тесе çырать.

Смитăн фашистла законне хирĕç протестленĕ ятпа Нью-Йоркра пысăк митинг пулнă

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Смитăн реакциллĕ законне хирĕç протестленĕ ятпа Нью-Йоркра пысăк митинг пулнă. «Сент Николас» клубĕн çуртне рабочисем, интеллигентсемпе студентсен представителĕсем—пĕтĕмпе 5 пин çын пухăннă.

Митинга пухăннисем ораторсем тухса каланине хĕрÿллĕ ырланă. Пур ораторсем те миршĕн кĕрешес ĕçе, Пĕрлешÿллĕ Штатсем, Совет Союзĕ тата мире юратакан мĕнпур халăхсем пĕр-пĕринпе мирлĕ килĕштерсе пурăнмалла тăвассишĕн кĕрешес ĕçе вăйлатма чĕннĕ. США правительстви, коммунистсен прависемпе ирĕклĕхне тапăнса, прогрессивнăй юхăма пăвса лартма хăтланнине хирĕç миршĕн кĕрешес ĕçе вăйлатмалла, тенĕ.

Митингра тухса калакансем пурте Смит законне пăрахăçлаттарассишĕн, çав реакциллĕ закон тăрăх тĕрмене хупнă çынсене, США-ри коммунистсен партийĕн Фоли-скверти судра ним сăлтавсăрах айăпласа тĕрмене хупнă руководителĕсене пурне те ирĕке кăларассишĕн кĕрешмелли, хальхи вăхăтра Смит законне пăсма хăтланнă тесе татах та тепĕр 51 çынна—коммунистсемпе прогрессивнăй деятельсене суд туса тĕрмене хупассине сирсе ярассишĕн кĕрешмелли анлă кампани сарса яма чĕннĕ.

Çитес вăхăтрах суд умне тăратакан 17 коммунистран митингра 8 коммунист: Елизабет Флинн, Петтис Перри, А. Лэннон, Айсидор Биган, Арнольд Джонсон, Клолия Джонс, Сеймон Джерсон, Джордж Блэйк Черни сăмах тухса каланă. Митингра тата Америкăри рабочисен партийĕн председателĕ Вито Маркантонио сăмах каланă. Вăл США-н Сăтăрла ĕçсем тунине контроллесе тăракан управленийĕ текенскерĕнче коммунистсен партине хÿтĕлекен защитник пулса тăрать.

Ораторсем пурте вĕсене миршĕн тата ирĕклĕхшĕн кĕрешнĕшĕн айăпласа суд тăвас тата тĕрмене хупас хăрушлăх пурри çинчен, влаçсем хăйсен вăрçă планĕсене пурнăçлама тăрăшни, хăратса, хĕсĕрлесе тата арестлесе миршĕн тăракан мĕнпур çынсен сассисене хупласа лартма хăтланни çинчен каласа панă.

Маркантонио митинга пухăннисене коммунистсен конституцире çырса хунă прависене, Америка халăхĕн демократиллĕ прависене хÿтĕлессишĕн кĕрешме чĕннĕ. Фоли-скверта коммунистсене суд тунă хыççăн мĕнле лару-тăру пулса тăни çинчен каласа, Маркантонио: «пирĕн пĕтĕм çĕршыв халĕ хăраса ÿкнĕ, пĕтĕм çĕршывĕпех коммунистсене кăна мар, прогрессивнăй шухăшлă мĕнпур çынсене тата вак халăхсене хĕсĕрлесси анлă саралнă», тенĕ.

Демократие хирĕçле тепĕр закона — Маккарэн законĕ текенскерне йышăннине Маркантонио Америка халăхĕн ирĕклĕхне хирĕç кавар тăвас ĕçе вĕçлесе çитерни тесе хак панă.

Митингра пурте пĕр шухăшлă пулнипе икĕ резолюци йышăннă. Вĕсене иккĕшне те Трумэн патне ярса панă. Пĕрремĕш резолюцире Трумэн умне коммунистсен партийĕн тĕрмене хупнă руководителĕсене халех ирĕке кăларма требовани лартнă. Трумэнăн çĕршыври лару-тăру çинчен çырмалли тепĕр посланире Смит законне пăрахăçлама ыйтмалла, тенĕ.

Иккĕмĕш резолюцире «Негрсемпе индиецсен пурнăçне малалла аталантарассишĕн кĕрешекенсен нациллĕ ассоциацийĕн «Флоридăри уйрăмĕн секретарьне Мура вĕлерекенсене арестлеме тата суда пама требовани лартнă.

Великобританири коммунистсен партийĕн съезчĕ пулать

ЛОНДОН, январĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Великобританири коммунистсен партийĕн пичет пайĕ 1952 çулхи апрелĕн 11-мĕшĕпе 14-мĕшĕ хушшинче Лондонра Великобританири коммунистсен партийĕн 22-мĕш съезчĕ пуласси çинчен пĕлтернĕ.

Съезд коммунистсен партийĕн генеральнăй секретарĕ Гарри Поллит политикăллă лару-тăру тата парти задачисем çинчен тунă доклада сÿтсе явать; партин «Британин социализм патне каймалли çулĕ» ятлă программине йышăнать; коммунистсен партийĕн уставне çĕнĕрен пăхса тухать тата парти исполкомне суйлать.

Англин Суэц каналĕ патĕнчи çарĕсем госпитале тапăннă

КАИР, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем Англи çарĕсем Суэц каналĕ патĕнче агрессиллĕ çĕнĕ ĕçсем туни тата Египетăн мирлĕ çыннисене вĕлерни çинчен пĕлтереççĕ.

«Аль-Ахрам» хаçатра çапла çырнă: январĕн 4-мĕшĕнче Англи çарĕсем, пулеметсем лартнă икĕ бронемашина пулăшса тăнипе, Египет госпитальне хупăрласа илнĕ. Госпитальре чирлĕ çынсем туллиех пулнă. Англи çарĕсем госпиталь çурчĕ çине пин хут ытла пенĕ. Кайхине Англи çарĕн чаçĕсем Суэца хупăрласа илнĕ, вичĕ çурта аркатса тăкнă тата нумай çуртсене сиенленĕ.

Англи салтакĕсем хушшинче тата агрессорсене хирĕç тăнă Египет çыннисем хушшинче аманнисемпе вилнисем пулнă.

«Аль-Ахрам» хаçат корреспонденчĕ Порт-Саидран çакăн çинчен пĕлтерет: Египетăн пĕр-пĕр çынни акăлчансен лагерĕсем патĕнчен иртсе пырсан, Англи салтакĕсем ун çине пăшалпа переççĕ. Корреспондент каланă тăрăх, январĕн 4-мĕшĕнче кăна Англи салтакĕсем Порт-Фуадра пурăннă пĕчĕк арçын ачана, Абу-Сувейра хулинчи Али Солиман рабочие, Нефишра Египетăн 7 çыннине тата пĕр именире фермера вĕлернĕ.

Акăлчан-преподавательсене ĕçрен кăларнă

КАИР, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Египет çутĕç министрĕ Таха Хуссейн-бей уйрăм çынсем тытакан шкулсем тĕлĕшпе ĕçлекен департаментăн генеральнăй директорне распоряжени панă. Распоряженире правительство государство учрежденийĕсенчен Англи чиновникĕсене кăларса ярасси çинчен йышăннă постановление пурнăçланă май Египетри уйрăм çынсем тытакан шкулсенчи акăлчан-преподавательсене ĕçрен кăларса яма хушнă.

ФИНЛЯНДИРЕ НАЛОГСЕНЕ ÿСТЕРНĔ

ХЕЛЬСИНКИ, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндири ĕççыннисем 1952 çулта налог тÿлемелли кĕнекесене хăйсен аллине илнĕ, çав кĕнекесем тăрăх ĕççыннисенчен налог пухаççĕ. Хаçатсем çапла çыраççĕ: кăçал ĕççыннисене налогсене чакарма сăмах панăччĕ, çăннипе налогсем пĕлтĕрхинчен чылай ÿсеççĕ. Кашни ĕççыннин уйăхра тÿлемелли налогĕ пĕлтĕрхинчен темиçе çĕр марка нумайрах пулать.

Бейрутра рабочисен демонстрацине хутшăннă çынсене суд тунă

БЕЙРУТ, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрьти Социализмлă Аслă революци 34 çул тултарнă ятпа Бейрутра рабочисен демонстрацийĕ пулнă. Çав демонстрацие хутшăннă çынсене айăпласа Бейрутри суд приговор йышăннă. Демонстрацие хутшăннă 10 çынна пĕр уйăхран пуçласа виçĕ уйăх таран тĕрмене хупмалла тунă. Çурçĕр Ливанри демократиллĕ паллă деятеле Бадреддин Марджане те тĕрмене лартма приговор йышăннă.

ИРĔКСĔРЛЕСЕ ÇАР КАЗАРМИСЕМПЕ АЭРОДРОМСЕМ ТУНĂ ÇĔРТЕ ĔÇЛЕМЕ ЯРАÇÇĔ

БЕРЛИН, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви «Френкише прессе» хаçатра çакăн пек хыпар пичетленни çинчен пĕлтерет: Хĕвеланăç Германире ĕçсĕр тăрса юлнă 75 пин çынна ирĕксĕрлесех строительствăсенче ĕçлеме яраççĕ.

Вĕсене ĕç укçи сахал тÿлесе оккупаци çарĕсем валли казармăсем, аэродромсем тата ытти çуртсем тунă çĕрте ĕçлеттереççĕ. Çĕршыва çĕнĕрен хĕçпăшаллантарассипе çыхăнса тăракан ĕçсене кайма килĕшмен ĕçсĕр тăрса юлнă çынсене пособи памаççĕ. Пĕр Баварире кăна строительствăсенче ĕçсĕр тăрса юлнисем 25 пин çын ĕçлеççĕ.

ТРАНСИОРДАНИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ПУÇЛĂХНЕ АРЕСТЛЕНĔ

ПРАГА, январĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Телепресс агентстви Израильти «Кол гаам» хаçатра Трансиорданири коммунистсен партийĕн пуçлăхне Фуад Нассара арестленĕ пирки хыпар пичетленни çинчен пĕлтерет.

Совет делегацийĕ Кăнтăр Италире

РИМ, январĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Совет халăхĕ Италире шыв тулнă пирки инкек курнă халăха пулăшма панă парнесене Италие илсе пынă Совет делегацийĕ ĕнер Реджо-ди Калабрия хулине пырса çитнĕ. Хула халăхĕ делегаци членĕсене хаваслă кĕтсе илнĕ. Делегаци членĕсене «Италия—СССР» обществăн генеральнăй секретарĕ Берти илсе пынă. Темиçе çĕр ĕççынни вокзалтан Ĕç Палати çуртĕ патне ситиччен совет халăхĕ янă çынсемпе пĕрле пынă. Ĕç Палати çуртĕнче митинг пулнă.

Реджо-ди Калабрия хулинчи ĕççыннисем ячĕпе митингра Ĕç Палати секретарĕ Фрагомени, «Италия — СССР» общество ячĕпе Берти профессор сăмах тухса каланă. «Çак демонстраци тата итальянецсем Совет Союзĕнчен килнĕ юлташĕсене хисеплесе саламлама иртернĕ вунпшар демонстрацисем çакна кăтартса параççĕ: кам Совет Союзне хирĕç курайманăр пурăнас шухăша сарать, çавсем Итали халăхĕн шухăш-кăмăлне, Итали интересĕсене пĕлмеççĕ тата ăнланмаççĕ», тенĕ Берти.

Совет делегачĕ Тимофеев совет халăхĕ коммунизм тăвассишĕн кĕрешес ĕçре тунă çитĕнÿсем çинчен каласа кăтартнă. Унăн сăмахне митинга пухăннисем тăвăллă алă çупса ырланă. Лебедевăпа Березин делегатсем те саламлă сăмахсем каланă.

Çав кайхине делегатсем «Италия — СССР» обществăн вырăнти уйрăмĕ иртернĕ йышăнура пулнă.

Сицилире пурăнакансем совет делегачĕсене ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ

РИМ, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕнчи ĕççыннисем Италире шыв тулнă пирки инкек курнă халăха панă парнесене Италие илсе пынă совет делегацине Сицилири халăх пысăк хаваслăхпа кĕтсе илнĕ. Реджо-ди Калабрия хулинчен Катания хулине каякан çул çинчи пур станцисенче те Сицилири ĕççыннисем совет делегачĕсене ăшă кăмăлпа кĕтсе илсе саламланă. Катанири вокзалта Совет Союзĕнчен хăнасем пырса çитнĕ ятпа демонстраци пулнă.

Паян ирхине Катания хулинчи пĕр театрта пысăк митинг иртернĕ. Унта Катанири темиçе пин ĕççынни пухăннă. Вĕсем Совет Союзĕнчи ĕççыннисене тав тунă. Зала пысăк лозунгпа илемлетнĕ, унта вырăсла: «Миршĕн кĕрешекен аслă паттăра Сталин юлташа—салам!», тесе çырнă.

Митинга пухăннисем умĕнче совет делегачĕсем Березин, Лебедева тата Тимофеев сăмах тухса каланă. Вĕсем калаçнисене ырласа, митинга пухăннисем темиçе хутчен те алă çупнă. Катани Ĕç Палатин секретарĕ Ди Мауро саламлă сăмах каланă. Катанири муниципальнăй правлени ячĕпе мэр помощникĕ Флорио сăмах каланă. Совет делегачĕсем пирĕн пата килни пирĕн хулашăн пысăк событи пулса тăрать, вĕсем килнине хула çыннисем нумайччен асра тытĕç, тенĕ Флорио. Вăл хăйĕн сăмахне Совет Союзне хисеплесе саламланипе тата çĕр чăмăрĕ çинчи мĕнпур халăхсене миршĕн тăма чĕннипе вĕçленĕ. Унтан Флорио совет делегачĕсене виçĕ медаль парнеленĕ. Ку медальсене Винценто Беллини — паллă композитор çуралнăранпа 150 çул тултарнă ятпа туса хатĕрленĕ. Вăл Катанире çуралнă пулнă. Тăваттăмĕш медале Флорио Мускаври государствăн музыка культурин центральнăй музейне пама ыйтнă.

Катание тухса кайиччен совет делегацийĕ Реджо-Калабрия провинцийĕнчи шыв тулнă пирки нумай инкек курнă хуласенче пулнă. Плати ятлă пĕчĕк хулара Совет делегацийĕпе пĕрле унти мĕнпур халăх—5 пин çын хула мĕн чухлĕ инкек курнине пăхса çÿренĕ.

ФРАНЦИРИ ОБЩЕСТВЕННОСТЬ СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ТАТА ХАЛĂХ ДЕМОКРАТИ ÇĔРШЫВĔСЕМПЕ СУТУ-ИЛĔ ТĂВАС ĔÇЕ ВĂЙЛАТМА ХУШАТЬ

ПАРИЖ, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Франци халăхĕн тĕрлĕ сийĕсенче Франци тата Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсем хушшинчи суту-илĕве вăйлатассишĕн тăрăшакансен юхăмĕ саралса пырать.

Демократиллĕ организацисен представителĕсем кăна мар, буржуалла уйрăм хаçатсемпе нумай предприятисен хуçисем те, тĕнчери пур çĕршывсемпе те, çав шутра Совет Союзĕпе, Китай Халăх Республикипе тата халăх демократи çĕршывĕсемпе ытларах суту-илĕ тумалли çинчен час-часах калаççĕ.

Франци промышленносĕн уйрăм отраслĕсем хальхи вăхăтра пысăк йывăрлăха кĕрсе ÿкни çинчен çырса, «Юманите» хаçат паян чылай предприяти хуçисен, профсоюз деятелĕсен тата влаçсен вырăнти органĕсен представителĕсен заявленийĕсене пичетленĕ. Çав заявленисенче вĕсем Франци ытти çĕршывсемпе суту-илĕ тăвас ĕçе халех кирлĕ пек йĕркелемелле, суту-илĕве вăйлатмалла, тесе çыраççĕ.

Хаçат, сăмахран, çакăн çинчен пĕлтерет: паянхи кунра Францире пир-авăр промышленносĕнче ĕçлекенсем хушшинче ĕçсĕр тăрса юлнă рабочисем 100 пин çын ытла. Америка монополийĕсен конкуренцине пула Францире пир-авăр предприятийĕсене нумайăшне хупса лартма тивнĕ. Пир-авăр фабрикисем уйрăмах Изер департаментĕнче нумай. Изер департаменчĕн генеральнăй совечĕ Францийе Совет Союзĕ хушшинчи суту-илĕве анлă сарма кирли çинчен заявлени тунă. Ун хыççăн пир-авăр промышленносĕн центрĕ пулса тăракан Вуарон хулин (Изер департаменчĕ) мэр-социалист ертсе пыракан муниципальнăй совечĕ те çавăн пек заявлени çырса панă.

Мио хулинчи (Аверон департаменчĕ) тир-сăран предприятийĕн директорĕ Рейналь: «Эпир хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсемпе хĕвеланăçĕнчи çĕршывсем хушшинчи суту-илĕве вăйлатассишĕн тăратпăр», тенĕ.

Францири паллă промышленник, иртнĕ вăхăтра республика совечĕн экономика комиссийĕн председателĕ пулнă Эрнест Армангo Тулузăра тухакан «Патриот» хаçатра статья пичетлеттернĕ. Унта вăл Франци ССР Союзĕпе тата халăх демократи çĕршывĕсемпе суту-илĕ тăвас ĕçе вăйлатмалла, ку вăл Франци экономикине юсама пулăшĕччĕ, тенĕ.

«Эпир хамăр шухăша каласа пама пултаратпăр,—тенĕ Армангo.—Ăна пурте ăнланса илме пултараççĕ. Эпир ирĕклĕ сутăçсем пулнă, çавăн пекех пулса юлатпăр, пирĕнпе килĕшсе ĕçлеме тăрăшакан çĕршывсемпе ĕçлĕ çыхăнусем тытмалли йĕркене çĕнĕрен тăвасси—пирĕн пĕртен-пĕр ĕмĕт. Ку вăл пирĕн хамăрăн шухăш-ĕмĕт, çавăнпа пĕрлех вăл пирĕн çĕршывăн шухăш-ĕмĕчĕ».

Францири предприятисен хуçисен «Эко» хаçатĕнче Европăн хĕвеланăçĕнчи çĕршывĕсемпе хĕвелтухăçĕнчи çĕршывĕсем хушшинчи суту-илĕ çинчен статья пичетленĕ. Хаçат тĕнчери çĕршывсен кăçалхи апрель уйăхĕнче Мускавра пулмалли экономикăллă канашлăвĕпе интересленет. Хаçат çакна палăртать: хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсемпе хĕвеланăçĕнчи çĕршывсем хушшинче суту-илĕ тăвас ĕç чарăнса ларни çĕршывсенче тĕрексĕрлĕх тăвать. Хĕвеланăçĕнчи çĕршывсен экономикине ертсе пыракансем хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсен экономикине ертсе пыракан представителĕсемпе тĕл пулса калаçмалла тăвас шухăшпа Великобританири, Хĕвеланăç Германири тата Францири анлă сийĕсем хытă интересленмесĕр тăма пултараймаççĕ. Кун пирки иккĕленмелли нимĕн те çук», тесе çырать хаçат.

Районти библиотекăра

ÇĔРПУ Ленин ячĕпе тăракан урамри пысăк çуртра районти библиотека вырнаçнă.

Библиотекăра таса та çутă. Вулакансем валли сĕтел-пукансем çителĕклĕ, кĕнекесемпе хаçат-журналсем нумай. Стенасем çинче «Мир вăйĕ ÿсет тата çирĕпленет», «Совет халăхĕн пысăк çитĕнĕвĕсем» ятлă витринăсем, «Совет Союзĕ миршĕн тата демократишĕн кĕрешес ĕçре», «Коммунизмăн аслă стройкисем» ятлă фотовитринăсем пур.

Библиотека çĕнĕ кĕнекесемпе пуянлансах пырать. Пĕлтĕр 3.264 тенкĕлĕх çĕнĕ кĕнекесем туяннă. Библиотека 1952 çул валли хаçат-журналсем иртнĕ çулхинчен чылай ытларах çырăнса илнĕ.

В. РОМАНОВ.

Радио кружокĕ

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Мартынкассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулта чылай çул хушши ĕнтĕ радио кружокĕ ĕçлет. Ăна математикăпа физика преподавателĕ Г. Михайлов юлташ ертсе пырать. Кружокра 40 çын ытла члента тăрать. Занятисем активлă иртеççĕ. Радио ĕçне тĕплĕ вĕренме пособисем çителĕклĕ.

Вĕренÿ çулĕн пĕрремĕш çурçулĕнче ачасем 40 детекторлă радиоприемник туса хатĕрленĕ колхозниксен килĕсене радио кĕртсе панă.

П. СОЛОВЬЕВ.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Александр Михайлович Токарев юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă пирки, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Культурăпа çутĕç учрежденийĕсен управленийĕн начальникĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

* * *

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Михаил Петрович Макаров юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă пирки, Чăваш АССР Çутĕç министрĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

Пĕлтерни

Январĕн 8-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, ВКП(б) хула комитечĕн парткабинетĕнче пĕрремĕш çул вĕренмелли политшкул руководителĕсен семинарĕ пулать. Тема: «СССР тата капитализмлă тĕнче».

Семинар руководителĕ—П. Г. Григорьев юлташ.

* * *

Январĕн 8-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечĕн парткабинетĕнче ВКП(б) историне вĕренекенсене пулăшакан консультантсем валли лекци пулать. Лекци теми: «И. В. Сталин юлташăн «Тата тепĕр хут пирĕн партири социал-демократла сулăнчăк çинчен» ятлă произведенийĕ».

Лектор—ялхуçалăх институчĕн преподавателĕ А. З. Оленко юлташ.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Государствăн 1948 çулхи 2 процентлă заемĕ

Выляса илмелли выпуск 8-мĕш выляврa выляв укçи тухнине кăтартакан

СПРАВКА-ТАБЛИЦА

Выляв 1951 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче Грозный хулинче пулнă.

Таблицăра 200 тенкĕлĕх облигацисем çине выляв укçи тухнине кăтартнă.

Выляврa тухнă укçа суммине выляса илнĕ облигаци хакне те кĕртнĕ.

Заемăн 72 разрядĕнчи çак серисемпе облигацисен номерĕсем çине выляв укçи тухнă:

Сери №№	Облигаци №№	Миçе тенкĕ	Сери №№	Облигаци №№	Миçе тенкĕ
000658	23*)	5.000	022839	05*)	5.000
001593	01*)	5.000	022885	1—50	400
001600	1—50	1.000	022890	1—50	400
001662	1—50	400	023301	34*)	5.000
001744	1—50	400	023733	1—50	400
001875	25*)	5.000	023742	32*)	25.000
001960	43*)	5.000	023948	27*)	5.000
002064	09*)	5.000	024089	1—50	400
002125	49*)	5.000	024184	1—50	400
002314	45*)	10.000	024282	1—50	400
002375	28*)	5.000	024496	1—50	400
003289	1—50	400	024775	1—50	400
003457	21*)	5.000	025162	1—50	400
003471	16*)	5.000	025722	1—50	400
003692	1—50	400	025923	1—50	400
003793	1—50	400	026006	1—50	1.000
003989	1—50	400	026236	20*)	10.000
004084	1—50	400	026990	40*)	10.000
004304	1—50	400	027113	1—50	400
004638	1—50	400	027308	20*)	5.000
005189	1—50	400	027872	1—50	400
005199	37*)	10.000	028252	46*)	5.000
005502	1—50	400	028361	1—50	400
005528	1—50	400	028423	26*)	5.000
005612	1—50	400	028637	1—50	400
005668	1—50	400	028790	1—50	400
005976	48*)	5.000	028816	1—50	400
006156	1—50	400	028877	32*)	5.000
006235	1—50	400	029070	07*)	10.000
006305	42*)	10.000	029252	1—50	400
006723	1—50	400	029349	1—50	1.000
006735	12*)	10.000	029362	13*)	50 000
006792	1—50	400	029952	03*)	10.000
006840	13*)	10.000	030069	1—50	400
007333	30*)	10.000	030111	18*)	5.000
007381	1—50	400	030290	1—50	400
007616	18*)	5.000	030579	1—50	400
007656	42*)	5.000	030790	22*)	5.000
007800	1—50	400	031331	33*)	25.000
007942	05*)	25.000	031710	1—50	1.000
008002	1—50	400	031961	14*)	25.000
008022	1—50	400	032157	1—50	400
008231	1—50	400	032191	11*)	10.000
008355	1—50	400	032442	1—50	400
008366	1—50	400	032456	1—50	400
008431	1—50	400	032772	1—50	400
008627	1—50	400	032780	1—50	400
009137	21*)	10.000	032999	1—50	400
009184	05*)	10.000	033127	1—50	400
009854	1—50	400	033195	1—50	400
009911	1—50	400	033245	1—50	400
010176	34*)	10.000	033950	1—50	400
010222	1—50	400	034255	1—50	400
010435	1—50	400	034383	1—50	400
010549	1—50	400	034419	50*)	25.000
010680	1—50	400	034527	1—50	400
010694	1—50	400	034660	1—50	400
010888	28*)	10.000	034700	1—50	400
011018	1—50	400	035018	1—50	400
011019	45*)	5.000	035215	1—50	400
011024	34*)	5.000	035345	1—50	400
011040	1—50	400	035451	01*)	5.000
011058	1—50	400	035535	1—50	400
011103	40*)	25.000	035646	33*)	5.000
011185	49*)	10.000	035706	1—50	400
011229	1—50	400	035815	27*)	5.000
011366	40*)	50.000	035871	1—50	400
011443	1—50	1.000	036971	1—50	400
011518	1—50	400	037773	1—50	400
011593	1—50	400	037877	20*)	5.000
011818	1—50	400	038299	1—50	400
011960	27*)	5.000	038308	36*)	25.000
012519	41*)	5.000	038435	25*)	5.000
012658	1—50	1.000	038535	1—50	400
012745	16*)	5.000	038829	1—50	400
012929	1—50	400	038841	1—50	400
013328	1—50	400	038927	1—50	400
013420	1—50	400	038933	1—50	400
013537	1—50	400	038976	1—50	400
013839	40*)	5.000	039442	1—50	400
013947	1—50	400	039698	1—50	400
014034	1—50	400	040033	33*)	5.000
014227	25*)	10.000	040149	1—50	400
014282	1—50	1.000	040193	1—50	400
014325	50*)	5.000	040207	1—50	400
014468	1—50	400	040234	1—50	400
014816	1—50	400	040264	1—50	400
015316	41*)	25.000	040282	1—50	400
015580	1—50	400	040452	1—50	400
015847	02*)	5.000	040568	24*)	10.000
016178	36*)	5.000	040710	18*)	5.000
016211	1—50	400	040796	24*)	5.000
016239	18*)	10.000	040852	44*)	25.000
016479	1—50	400	040943	1—50	1.000
016646	1—50	400	041336	1—50	400
016793	14*)	25.000	041341	1—50	400
017076	22*)	10.000	041662	1—50	400
017250	1—50	400	041708	1—50	400
017254	1—50	400	041895	09*)	5.000
017281	48*)	10.000	042110	1—50	400
017324	1—50	400	042144	1—50	400
017555	1—50	400	042472	06*)	10.000
017778	50*)	5.000	042664	28*)	5.000
017805	13*)	5.000	043475	1—50	400
017971	1—50	1.000	043549	1—50	400
018000	29*)	5.000	043706	1—50	400
018119	1—50	400	043844	1—50	400
018123	1—50	400	043865	1—50	400
018773	1—50	400	044227	1—50	400
019238	39*)	10.000	044478	1—50	400
019566	10*)	5.000	044502	1—50	400
019970	28*)	10.000	044823	1—50	400
020181	1—50	400	045098	23*)	10.000
020583	1—50	400	046762	1—50	400
020765	1—50	400	046983	1—50	1.000
020819	1—50	400	047208	1—50	400
020966	1—50	400	047226	1—50	400
020998	1—50	400	047259	1—50	400
021069	47*)	5.000	047562	1—50	400
021207	1—50	400	047842	04*)	5.000
021219	1—50	400	048017	12*)	5.000
021736	1—50	400	048057	05*)	5.000
021780	1—50	400	048672	1—50	400
022165	1—50	400	048754	32*)	5.000
022433	1—50	400	049221	1—50	400
022485	09*)	5.000	049507	1—50	400
022518	1—50	400	049864	1—50	400
022786	1—50	400			

*) Çак серие кĕрекен облигацисен ытти 49 номерĕ 400-шер тенкĕ выляса илнĕ.

ЧĂВАШ АССР ПЕРЕКЕТ КАССИСЕН УПРАВЛЕНИЙĔ.

Ответлă редактор **М. К. КОСТИН.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского 5 Дом печати ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67 ответлă редактор заместителĕ—3-90, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00905 Типография №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.